33-124

# Йал калаçăт

калавсем

Митта Петĕрĕ

Чăвашистат
Шупашкар
1933

Митта Петĕрĕ.

# Йал калаçаĭ

(калавсем)

ÇĂВАШИСТАТ
Шупашкар—1933.

Уполномочен.
Чувашлита № 1549.
Отпечатано в Цивильской
типографии № 3. Тираж 5100.
Чувашиздат 254. Зак. тип. № 200.
Ст. ф. б. 125x197. Печатн. листов 3 1/2.

# Макçăм çырăвĕ

Çурхи çанталăкăн илемлĕ тĕсне хаклама нимĕнле çыруçă-калавçăн та ĕнтĕ сăмахĕ çитеймĕ.

Йлемлĕ вăл. Ун сăнĕ тапаланакан ђĕрђунсемшĕн çав тери хаваслă. Епĕ хам çавăн пек шутлатăп... Çурхи çанталăкăн ђеђеклĕ сăнпитне ман ђĕре савнă ђул, тепĕр кађђă хăй çумĕнђи сар хĕрне те тăп-тăп савса, лăпкăн ађашлаймĕ. Çав тери кăмăллă вăл маншăн çурхи çанталăкăн ылттăн сар хĕвеллĕ илемлĕ кунĕ.

Ытла та уçă... Хаљ-хаљ таврари сĕм вăрман йешĕл тум пĕркенсе пĕтĕм ђĕрђуна хăйĕн çĕн сĕткенлĕ тутлă шăршине пĕрĕхсе кăкăр туллин ăнтăхтарса сывлаттарассăн туйăнать. Хаљ-хаљ шăнкăрђăсем килсе, кăвак тӳпере тăрисем ђĕвĕлтетсе çĕнĕ йурă—çураки йур ри сăвăласа кĕвĕлеççĕ пек...

## I

Хуралкка трийĕр çавăрса тăнă пулнă ăна пушталйун кăвак канвертлă çыру тыттарса хăварнă ђухне. Канвертăн айалти кĕтесĕнђе: „Ђулхула—Автосават—Макçăмран“ тесе паллă тунине вуласан, Хуралккан хĕрлĕ-сухалпа витĕннĕ тути темĕнле çемçенĕн çӳхелсе кулса илђĕ.—Кайрĕ те, манђĕ тесе еп... Çапах çырать иккен-ха... ик уйăх ытла çырманђĕ, тенĕ май çырăва хутласа шалти кимнаçторккă кăсйине ђикме пикенђĕ.

— Макçăмран мари?

— Çавăнтан...—ответлерĕ Хуралкка, прикатир ыйтнине хирĕç.

— Ай-йай, пĕлесђĕ... Мĕнле ĕçлетши пирĕн унти прикатă, пĕлесђĕ, Хуралкка пиђђе... вуласа памăни... тем çекретах çук тăр.

— Ĕç ђарăнатха. Вуласса вулăпăр.
— Ниђђево... пĕр меслете...

Кăвак канверт ăшĕнђен Хуралкка симĕс ђернилпа тĕрленнĕ шур хута тăпăлтарса кăларђĕ. Ун тавра колхоçнĕксем кĕпĕрленсе сырса илђĕç. Пурте итлесшĕн. Пурте икĕ уйăх малтан колхосĕнђен Автосавăта кайнă прикатăн ĕçне тĕплĕн пĕлесшĕн ăшаланаççĕ.

Ваççук мĕнлеши, пирĕн Ваççук,—тесе шухăшласа тăрат ватă Урине тăхлађă.

— Пурте пĕрлехши... ай пĕлесђĕ.

Хуралкка вулат:—„Атте, анне! Мĕнле пурнатăр? Колхосран йанă прикатă сывă çитрĕ, пурте пĕрлех пурнатпăр—пĕр сивĕ паракра... Атте! сана епĕ çакна пĕлтересшĕн. Есĕ тархасшăн хаљтерех колхоср...“—малалла вулама ђарăнса Хуралкка хăмлатса ӳсĕрсе илђĕ.—Çук ĕнтĕ ађсемĕр... вулаймăп урăх.

— Вулаха, вула... Ваççук мĕнлеши?
— Мĕнле „колхоср“ терĕн есĕ?
— Çук... „колхосри вăрлăхсене суртламашкăн васкăр“ тет вăл,—тесе сăмаха йапшаррăн çавăрса хуђĕ Хуралкка.
— Апла марха та...
— Та-а-а...
— Çыру интересnă...

Трийĕр каллех çаврăна пуçларĕ. Колхоçнĕксем васкавлăн хавхаланаççĕ. Тӳперен хĕвелĕ вăрăм шупка пайăркийĕсемпе хăлаçланса вĕтелет.

## II

— Çыру... Макçăмран,—терĕ алăкран кĕрсенех Хуралкка.

— Макçăмран,—терĕ те Васса инке, лăпкăн кулса илђĕ.—Калап çыру килет тесе... Çĕркаç тĕлĕкре те курсађђĕ епĕ ăна. Шап-шурă кĕпе тăхăннă пек, тăхăннă пек те... те... те...

Хуралкка çырăва вула пуçларĕ.—„Есĕ тархасшăн хаљтерех колхосран тухма тăрăш. Унсăрăн кунта пире ђĕр вилĕм. Кунсерен хĕнеççĕ. Кашни вырăс тĕл пулмассерен,—„ей потлес колхоçнĕк“, тесе урам

урлăшĕнђен ахăрса кăшкăрса иртсе кайаççĕ Пирĕн колхосран хилнĕ прикатăна пĕр сивĕ, хупран тунă парака хупса хуђĕç. Самăй йăвăр ĕçе ĕçлеттереççĕ. Укçине килес çулсăр та, йе петтилеткă пĕтмесĕр те памаççĕ пуљ ахăртнех. Атте! Аçтан та пулсан йӳнеç-теркелесе укçа тупса йарайманши. Киле пырасђĕ. Ахалĕн кунта вилетĕп епĕ. Курас киле пуçларĕ ĕнтĕ сире те. Как нипут укçа тупса йарăр. А, колхосран пайанах тухăр. Ваççуксен çемйисене те кала,—вĕсем те тухђăр".

Хуралкка çыру тытнă аллине тăснă май ђĕтрен-терсе, ђылайђђен çăварне карса пăхса тăђĕ. Пуçне пăркалат.

— Каларăм та çав,—тесе нăшăклатса ĕсĕкле пуç-ларĕ Васса инке.

— Каларăм та çав ан кай тесе. Хăй вĕт... Хăй прикатир пулса кайрĕ. Ак ĕнтĕ хаљ...

— Пета савçим,—тесе хĕрлĕ сухалне йаппаррăн шăлса илђĕ Хуралкка.— Ĕнтĕ мĕскер сутас... ăçтан тупса йарас укçа?..

## III

Пĕлместĕп... Ĕнине мĕн сăлтавпа сутнăха Хуралкка? Пĕртен пĕр пушмак пăрушпе йӳн хакпах сутса йађĕ Ваççук амăшĕ Урине те. Мĕншĕнха тата колхосран тухма ыйтусем пађĕç вĕсем иккĕш пĕр харăс...

Ђылайђђен тарăн шухăша путса тĕлĕнсе ларђĕ колхос претçетаттĕлĕ, Хуралккасем панă ыйтусене çавăркаласа тытса ларнă май.

— Макçăм... Ваççук—пирĕн колхосри паллă акти-виссем. Колхосăн малтанхи орканисаттăрĕсенђен пĕри-сем вĕт вĕсем. Апла тăк пайан кун мĕншĕнха çак тери киревсĕр картинăсем кăларса тăратаççĕ вĕсен ашшĕ-амăшĕсем.

Çав вăхăтрах алăкран кĕрекен сукна пађттоллă çын Макçăм иккенне ђасах палласа илђĕ претçетаттĕл.

— А...а...а! Сторовă, сторовă!..

— Сторовă та, сторовах та мар.

— Пĕлетĕп ĕнтĕ... пĕлетĕп.

— Тĕлĕнетĕп, Макçăм, мĕн хăтланатха аçу санăн. Тен сана пĕлтермен тĕр вăл.

—Акă пăх... Пирĕнпе тăшмансем сĕлехе йухтарсах кĕрешеççĕ кирек ăçта та. Мĕнле кăна ăсласа çырнă...

Претçетаттĕл Макçăм панă çырăва вуласа тухсан, тĕлĕнсе хытнă май, лĕнђĕрех шанса кайрĕ.—Вара хамăр йал Мирун алли вĕт ку, кулак ађи Мирун çырнă ку çырăва... тем тесен те çавă...

— Çавăн çавă. Епĕр ăна Ђулхулара тĕл пултăмăр. Вăл иртнĕ çула Автосавăтра хĕсĕнкелесе ĕçлесе çу каçнă. Хаљ тата Украйнă йеннелле кайатăп,—терĕ.

— Вара çак çыру тăрăх ĕпесене сутса йанăшим ĕнтĕ...

—Шăп çавăн тăрăх. Ĕне сутнă укçисене пирĕн пата куçарђĕç. Ваççукпа иксĕмĕр те тĕлĕнсе хытса лартăмăр. Килме калаççĕ. Йулашки ĕне сутнă укçисене куçаратпăр,—хăвăртрах килме тăрăшăр, тесе çыраççĕ килтен.

Макçăмпа претçетаттĕл ђылай калаçса тĕлĕнсе ларнă хыççăн, колхоçнĕксене пухса ку ирсĕр сăлтавсăр ĕç çинђен тĕплĕн ăнлантарас, тесе татăклăн шухăш тытрĕç.

## IV

Тулта çанталăк уçă. Тӳперен хĕвел пайăркисемпе хăлаçланса йура кышласа шăрантарасшăн вĕтелет.

Урампа калхоçнĕксем вулав çурђĕ йенелле пухăва утаççĕ. Пухура Макçăмăн Автосавăт историйĕ çинђен калăнакан токлатне сӳтсе йавмалла. Çавăнпа та колхоçнĕксем пысăк шанђăклă ĕмĕтпе ăмсанса утаççĕ пухăва.

Вĕсен хушшинђех Хуралкка та колхоçнĕксене автăрĕ кулак ађи пулнă „Макçăм çырăвĕ" пирки хĕрлĕ сухалне сикгере-сиктере калаçса пырса тĕлĕнтерет.

# Ĕне урмшĕн

— Та... Çавăнпа, конешнă. Çавăнпа та шăркана ларнă ларманах ăш тивсе кайаҫҫĕ пăри-тулă пуçахĕсене.

— Пур навусне те ыррăн çĕрĕштерсе тăкма пĕлмен вĕт епĕр.

—Хе-е-ей, каккуй,-терĕ Хумкка,-каккуй çĕртсе тăкмашкăн тетĕн. Хĕл каçаҫҫен улăмĕ-мĕнĕ йурпала варкăшăпса купаланать те карташне, çуркуннепе акас умĕн ана çине ăсанать. Ăсанати, ăсанмасти,—ăна каллех каламашкăн хĕнтерех. Ҫас-ҫасах пит ҫипер çырма пуçне те кайса йăвантаратăн. Карташу тасалса пултăр.

— Çапла, çапла,—тесе пирĕн ертел кулăшпа варкăштарса çирĕплетсе пырать Хумкка старикĕн сăмахне.

Хумкка ватă ĕнтĕ вăл. Старик йатне илтмешкĕн тивĕç. Анҫах ун ҫунĕ, калăпăр ҫĕри, çак пирĕн ертелри тийевлĕ фосворит лавĕсен хыççăн шапăлтатса пыракан „çара йанахсен" ҫĕрипе пĕрех тапать. Ахаљтен мар ăна çамрăксем иленнĕ. Ахаљтен мар иртнĕ çулла унăн прикатинҫе пĕтĕмпе çамрăксем ĕçлерĕç. Ахаљтен мар ĕнтĕ унăн прикати пуринҫен хастарлă ĕçленине кура, Хумкка старике колхоçнĕксен пуххи пĕр мăшăр çăматăпа пиншак парса парнеленĕ. Çавăнпа та вăл пире килĕшет. Çавăнпа вăл пирĕн кĕрneклĕ те, хастарлă колхоçнĕксенҫен пĕри.

Хумкка... Ăна аса илсенех вара ман куç умне унăн 10—15 çул кайалли сăнсăпаҫĕ тухса тăрать. Тата ун çинҫен атте каласа пани те.. пурте...

Ирсерен вăрăм пушă сĕтĕрсе утнине манаймастăп нихăçан та. Кунтĕрешкеленнĕ сăран кăсируклă тăла карттуспа çӳретҫĕ вăл йалан. Çийĕнҫи хĕрлĕ сăхманĕ, хай как калас, çитмĕл те çиҫĕ саплăклă пулĕҫҫĕ çав ĕнтĕ... Ĕнси çине çарăк аксан шăтмалăх тусан пусса кайатҫĕ.

Çавăнпа та ун ҫухнехипе хаљхине танлаштарсан, ман ăна хаљ урăхла çын, урăхла йатпа ҫĕнес килсе кайат.

„Хумкка кĕтӳçĕ“, йе „кĕлмĕç Хумкка“... Икĕ йатпа „хисепленĕ“ ăна ĕлĕк ђухнехисем.

Хаљ вăл йатсем Хумкка çинђен ĕмĕрлĕхе хывăнса, çĕпĕрен ђăн-ђăн тумпа пĕркеннĕ. „Паттăр Хумкка, Хумкка утарнĕк“ тесе ђас-ђасах калаçса ăна паллă вырăна хурса, сума сăваççĕ вара пирĕн колхоçнĕксем.

Паллах, Хумкканăн пурнăçĕ йăвăр та, хĕсĕк пулнă. Сакăр çултах ашшĕнђен тăлăха тăрса йулса хĕрĕх çул хушши кĕтӳ хыççăн пăнтăхса çӳренĕ вăл.

— Хĕрĕх çул хушши çӳресе сынран сив сăмах илтсе курманђђĕ. Макçăмран ĕнтĕ пулкаланă, тата унăн йыттисенђен... Кулак Макçăмран пĕрре ђăтăмсăр мăшкăл тӳсмелле пулђĕ,—тесе каласа кăтартнăђђĕ вăл мана пĕринђе. Мана анђах мар, хăй тенĕ çынĕсене ђас-ђасах Макçăмпа пулса иртнĕ историне каласа парать вăл. Мĕншĕн тесен, Макçăмăн ĕмĕтсĕрлĕхĕ унăн ђĕрине хăйранă сысна çĕççи пек кĕрсе вырнаçăннă.

Кĕтӳри хĕрлĕ ĕнен кайри ури кĕпер шăтăкне кайса хуçăлни Хумкканăн пулас ĕмĕђĕшĕн ăмсанса тапакан ђĕрине самайах хуçăлтарнă.

— Ĕне уришĕн... Хĕрлĕ ĕнен кайри уришĕн,—тет вара вăл йалан.

— Тӳлесен тӳле ĕне урине!.. Тӳлемесен арăмупа ађуна, хăвна та кĕçĕрех пĕр шăтăка кайса кӳтĕркелесе ђикетĕп. Йе уратнике илсе килсе ăшалаттаратăп. Ђĕрĕллех типĕ тамăкра вĕтеленеђђен, кала луђђĕ пĕр сăмахна!.. Татăклине!?.

Хайăррăн туласа тăкас пек кăшкăрнă Макçăм... Кĕрленĕ урнă сас. Çăварне араслан пек карса пăрахса, тĕкме йевĕр шăлне тикăрла шатăртаттарнă.

... Мĕн тăвăн. Ăçта вара пире Макçăмсемпе калаçма—пĕтĕм йал вĕсен кĕввипе ташлать тĕк; паллах, нимĕнле Хумккасем те пĕђђенĕн çĕнтерме пултараймаççĕ. Ирĕксĕрех Макçăма пĕр кайри урашăн, ђетвĕрт ерехсĕр пуçне, пĕр çурпилĕк çĕре виç çула тара памалла пулђĕ.

Ђетвĕрт... Умри ђетвĕрт пушаннăçемĕн пушанса пилĕк „касакăн“ карланкисене ђӳхет.

— Ех!..—терĕ Макçăм.

— Конешнӑ...—терӗҫ унӑн вӑслатӑвӗ хыҫҫӑн кайакан йыттисем тӑваттӑн харӑс:—Ҫапла... ҫапла...

— Итлеха, Хома Кнуттӑв!.. Хӑҫан мана—Макҫӑм Павӑлҫа сан йевӗр пайанхи пек хурлӑх кӳни пур!?.. Ҫук, конешнӑ... Акӑ ырӑ ҫынсем. Вӗсем маншӑн лайӑх пулсан,—епӗ вӗсемшӗн темиҫе хут лайӑх. Пурнӑҫа пурӑнма пӗлни кирлӗ.

Айӑккинҫе ҫеркке кӗтсе ларакансем Макҫӑм сӑмахӗсене „вара, вара“ тесе ҫирӗплетнӗ май, ун ҫӗлхи вирлӗрен вирлӗ сӑмахсем тӑпӑлтарса кӑларат. Куҫӗсем Хумкка ҫинелле кӑвар пек йалкӑшса тӗллеҫҫӗ.

—Ҫӑнахах та, Кнуттӑв. Ене урине каплипех ӳт илеймӗ. Есӗ кӗҫӗр кӑмаку хыҫне выртатӑн пулсассӑн, ак епӗр кинпе тӗпеле... Кутник ҫине.

— А-а-а-х-х!..—ҫухӑрса йӗрсе йаҫӗ Укҫине:— Мӗнма ес каплах мӑшкӑлатӑн!?..

Хумкка ҫӑтса лараймарӗ. Арӑмӗн ҫунӗ ҫав тери тӑвӑлса ҫитнине сисрӗ вӑл. Ҫавӑнпа та сакайӗнҫи пурттине илсе Макҫӑм йенне сӗвенҫӗ.

— Ҫитет, Макҫӑм Павӑлҫ!.. Ҫӑтса пулмаст!.. Каса... а...а...а тӑ...ӑ...п... Анҫах Хумкка сасси ҫасах пӳлӗнсе ларҫӗ. Унӑн тӑнлавне ҫетвӗрт кӗленҫипе килсе ҫапни йаштака тӑлпӳне урайне тӑсса антарҫӗ. Ыттине вара вӑл астӑваймаст. Кайран мӗн пулнӑ тӑр вӑл каҫ...

*
* *

... Кама саватши ҫак хӗвел? Камшӑн йӑл-йӑл пӑхса лӑпкӑн аҫашлатши?.. Ех, Ваҫӑ, Ваҫӑ!.. Сӑпкаранах хурлӑхпа ҫӳхенсе ӳссе мӗнле телейлӗ ҫын пулма пултарӑнши ес?.. Ҫук!.. Тӗнҫе ҫути арман хуҫи Макҫӑмсемшӗн ҫехи тен. Хӗвел те вӗсемшӗн ҫех йӑл-йӑл пӑхса лӑпкӑн ҫупӑрласшӑн пулӗ...

Ҫылайҫҫен ҫурт ҫумӗнҫе аҫине тытса тӗлӗрсе ларнӑ Хумкка. Унӑн иртнӗ каҫ пулнӑ пуҫӗнҫи суранне арӑмӗ шур пир татӑкӗпе ҫӗркесе ҫыхнӑ. Суранӗ йепле туртӑнса ыратат пулсан та, унӑн ҫӗри иртнӗ каҫхи мӑшкӑлшӑн сӑрӑлтатса ыратнипе суранӗ ҫиннҫе шухӑшламаст те вӑл.

— Çук... урăхран савăнăç тилмĕресси çук.. Вађă... тенĕ вăл каллех аллинђи ађине йăпатса.—Есĕ манăн хаклăран та хакли. Сана епĕ нимле мул, Макçăм мулне пĕтĕмĕшпех парсассăн та улăштарассăм çук. Хăçан вăхăт çитĕ. Мĕнле пулĕ есĕ ўссен...

* *
*

... Вăхăт шăваť. Вăхăт никама та кĕтмест, кĕттермест те. Вăхăт хăватлă та, васкавлă утăмсемпе пусăмланă май, иртнĕ саманасем çĕнĕ тапхăрăн çĕнĕ пусăмĕсен айне нихăçан тухайми пулăнса йулаççĕ.

* *
*

Хĕвел хĕртнĕçем хĕртсе, хĕл каçађђен шăнса хытса ларнă çула навуслэнтараť.

Пирвайхи шăнкăрђăсем ватă йăмра турађĕсем çинђе çĕнĕ йурă—çураки йурриие кĕвĕлесе ларнă.

Кăçал кађђа тухма шут тытнă хитре хĕрсем пирвайхи шăнкăрђăсене йĕкĕршерĕн курасшăн пулнă. Анђах хăрахăн, йе виç шăнкăрђăн тĕле килнĕ. Паллах, вĕсем хушшинђе йĕкĕршерĕн тĕл пулнисем те пулкаланă. Савăннă вара вĕсем. Хĕпĕртенĕ...

—Нивушлĕ кăçал та кайса пулмасť,—тесе куљанпă хăрахăн курнисем.

—А, нивушлĕ епĕ пĕтĕленсе кайатăп пулатха,--тесе тĕлĕпнĕ вара хăйсенђен хăйсем виçĕ шăнкăрђă тĕл пулсан.

—Ей, вăл нимĕне те пĕлтермест,—тесе куљанакансен ђĕрисене лăплантарасшăн пулнă çавсем хушшинђенех ђи ăслă та, ђи хитрисем...

Хуралтă çивиттийĕсем тăрăх шуса çĕре тумлам, çурхи тумлам шăпăртатнă. Йал çинђе кас кассăн виђкĕн сасă--трийĕр сасси кĕрĕлтетет. Унта колхоçнĕксем вăрлăх суртлаççĕ.

Йал тăрăх прикатă хыççăн прикатăсем иртсе пынă. Çураки кампанине пољшевиклаирттерсе йарасси çинђен прикатирсем хĕрелсе кайсах халăх çинђен сăмах кунђаланă.

Паллах çăва тухасси. Ана копператтива çĕлĕксем, çăматăсем сутăнма килнинђен те пĕлме пулат.

Çапла вăл çурхи сăн. Çапла вăл хитре хĕр пек йăл-йăл пăхса илнĕ май,—йăлкăшса пур тапаланакан ђĕрђунсене хаваслантарат. Çырма-çатрасем тăрăх йур пăрсем хурлăхлăн макăрса таçти кĕтессе ăсăнаççĕ. Кулак йевĕрлех макăраççĕ вĕсем. Анђах мĕн тăвăн. Ĕмĕр хуçа пулаймăн çав. Пире есĕр йăлăхтарнă. Пире вăхăт çитнĕ май илемлĕ те, ирĕклĕ çулла кирлĕ. Епĕр çавна кăмăлтан тимсĕлетпĕр.

Астăватăп. Ун ђухне пирĕн йышăмăр пайанхи пек 86 хуçалăхлă марђђĕ,—14 хуçалăхпа пĕрлешĕнсе тухнă епĕр пĕрремĕш полђшевикла çуракине. Çанталăк йанкăр уйар. Тӳперен хĕвел вĕтеленĕçем вĕтелесе, йулашки типсе пĕтеймен çĕр лаптăкĕсене сăрхăнтарса типĕтет. Вунă лашана пилĕк плукă кӳлсе, ĕмĕр хăрăнса хавшанă асаттесен йăранĕсене тĕпĕ-йĕрĕпех çĕмĕрсе тикĕслесе тухнă епĕр çĕн уйа.

Кăнтăрла... 12 сехет... Хумкка пире ваљђи апат тийесе темле васкавлăн хашкаса çитрĕ.

— Вот сире çĕнĕ хыпар,—терĕ вăл.

— Мĕнле?.. Вађă çинђен мари!..

Колхоçнĕксем Хумккан йуратнă ывăлĕ Хĕрлĕ çарта ђухне çухалнине пĕлеççĕ. Кĕрешӳре вилнĕ пулĕ... пайан ашшĕ вăл сывви çинђен илтменши, теççĕ.

— Çук,—тет Хумкка,—ун çинђен марха... Макçăм шыва сикнĕ.

— Макçăм... Павăл Макçăмĕ. Хăй арман пĕвинех сикнĕи мĕн?..

— Хăйĕн мар, мĕнле пĕве пур ун?..—терĕ Хумкка, —халђ вăл пĕве вĕт пирĕн алăра. Пирĕн пĕвери шыва сик | пăхнă снађђăт...

Мĕнле сиксе пăхнă?

— Мĕнле?.. Çаплах!..

Темĕнле хăравлăн тăракан колхоçнĕксем Хумкка каланнинђен ахăлтатса кулса йађĕç.

— Макçăм ку шухăша хĕллех пурнăçласшăн пулнă гет. Анђах хĕллехи шыва сиксен шăнса вилесрен хăранă. Урине çеç ђиксе пăхнă. Тата интерес те сахалрах

пек туйăннă. Халĕ... Ăшăра пĕтĕм тăлпăвĕпех сиксе пăхнă,—кĕпине пиншакне пирĕн пĕве хĕрне хăварсах тарнă... Вăрмана...

— Çапла çарамасахи?..

— Хах-ха,-хох-хох-хох!..—лахлатаççĕ колхоçнĕксем. Вĕсем хушшинҫе ентуçиасăм çĕкленнĕçемĕн çĕкленсе пырать. Еçлеме пуçларĕç.

— Кèписем çине хут çырса хăварнă тет.

Хăйне шеллеттересшĕн имĕш...

— Шеллеттересшĕни унта, мĕни!.. „Ыр курăр ман пурлăхпа, хам пĕвене хам сикетĕп... Çапах аларан хăтăлаймăр. Ик-виç колхоçнĕкне пĕвене туртса кĕретĕпех“ тесе каланă тет... Хăй çынна систер-месĕр тарасшăн пулнă та, шыв хĕрринҫе вылҫакан пионерсем курса йулнă.

— Вăт праклеттăй... ăсĕ çтан çитет?

— Вилес темесĕр вăл. Кулак вилес тейĕха ҫасах... вилсессĕн те авă колхосах кăшласшăн.

...Анҫах çапах та, йепле пулсан та Макçăм пулас пурнăçăн условине аван тавçăрса илнĕ. Çăва тухсан та, хĕле кĕрсен те Макçăмсемшĕн пурнăç çулĕ çĕлен çип ҫухлĕ те йулман.

Вĕсем тĕрлĕ йенҫен, тĕрлĕ майпа кĕрешсе кăтартаççĕ пулин те, вĕсен кавсăлса хапсăнуллăн ĕмĕтленекен тивлеҫĕсен шалҫи ҫикки таранах тулса ларнине пайан епĕр аван куратпăр.

Мăкланса çĕрĕше пуçланă кив пурнăçăн тымарĕсене ертелпе кăкласа сив авăрăн тĕпне ĕмĕрлĕхе пăрахатпăр.

* * *

Хĕвел Сăкăт хыçĕнҫен хĕрелсе туха пуçланă. Çанталăк сивĕ мар пулин те, сулхăм çил пит-куçа самайах çӳçентерет. Çĕр хута килетпĕр епĕр Канашран. 26 лав... Тийевлĕ фосворит лавĕсем. Колхосăн çĕрне çĕнетмешкĕн илсе килетпĕр ăна епĕр.

— Вуннă çапнă ĕнтĕ,—терĕ Хумкка.—Кун тăршшĕ вунă сехет, „Ун унҫатта“ тет вара тутар. Ҫăнахах та çул йепле çăмăл. Лашасем тарламаççĕ те вĕт. Итлеха,

Петĕр,—терĕ вăл,—курăпăрха. Епĕ унђен вилесшĕн марха. Тепĕр икĕ çултан епĕр çакă çулпа лашапа тертленсе çӳрес çук. Çакă фосворита крусовиксем тийесе мĕкĕрттерсех леçсе парĕç пирĕн колхоса... Аван вĕт...

— Хай Канашрисеми?--терĕм епĕ.

— Та... КанашпаШупашкар хушшинђе çӳрекеннисемех. Çавсем ђасах улăштарĕç пирĕн ула кĕсремĕрсене.

— Виççĕмĕш татăкла çул... Виççĕмĕш... Виççĕмĕш пољшевикла çураки...

— Макçăм „вилни“ икĕ çул ĕнтĕ.

— Макçăмсен самани вилни 14 çул тултарђĕ,—терĕ Хумкка.—А, унăн хура йунпа кĕвĕлсе ларнă ђĕри лăпланма вăрмана тарни икĕ çул иртрĕ. Унтанпа ђылай шыв йухнă. Çав йухăмсемпе пĕрле Макçăмăн йăх-тĕпĕсем те тасалăнса ăсанăннă. Анђах тĕпĕ-йĕрппех тасалăнса ăсаннă тесе каламашкăн хĕнтерехха Ăна есĕ, Петĕр, халăхăн кашни аслă пуххинђех асăрхатăн пулĕ.

...Мĕнле ăслăлăх. Мĕнле хаваслă та, çыпăçуллăн пĕтĕрĕнсе тухаççĕ унăн çăварĕнђен сăмахсем.

Тĕлĕнетĕп епĕ. Ывăлĕ Хĕрлĕ çартан тавăрăнаймасăр йулни хытă куљантарать те старике, çапах вăл алăсене усса лармасть. Маттур, хастарлă ĕçлет. Çавăнпа та манăн Хумкка старике меслет пулсассăн тата çитмĕл те çиђĕ çул усрассăм килет çак çĕр çинђех.

Калаçса пырса йала пырса кĕнине сисмен те епĕ. Пирĕн ертел колхосăн пысăк ампарĕ умне кĕпĕрленнĕ. Йĕркипеле тăсăлса ђеретленнĕ лав... фосворит лавĕсем. Çавăнтах трийĕр, сортировккăн сассисем кĕрлесе çĕмрĕлтерет ирхи сывлăша. Унта вăрлăх суртлаççĕ.

...Калаçни, кулни... тĕрлĕрен хаваслă шапăлту кĕввисем, трийĕр, сортировккăн виђкĕн сассисемпе хутăшса кайса, таçти катари касса кас-кассăн илтĕнсе илемлĕн вĕçленеççĕ.

# Актӑ

— Ҫӑнахах та, Куҫма кум... Мӗн манир те пулсан тума пулӗши?...—тесе йапшаррӑн хуҫӗ сӑмахне Савук пуҫлӑха ҫеркке тыттарнӑ хушӑра.

— Мошнӑ... Паранкӑ ҫинҫен пайанах актӑ ҫыратпӑр... А, тырӑ... тырӑ ҫинҫен конешнӑ, хурт ҫисе йанӑ тесе сайавлени парӑн.

— Килӗшетӗп...—йӑл кулса илҫӗ Савук. Актӑ ҫинҫи сӑмахсем питӗ ҫыпӑҫуллӑ йака ҫырӑнса тирӗнҫӗҫ. Ҫеркке хыҫҫӑн ҫеркке ӳпӗнсе пуҫлӑхӑн ҫӗрипе ҫемҫетрӗ. Тулли кӗрекери ӗҫме-ҫимепе пӑсланнӑ актӑ вуланӑнаӗ:

— „Епӗ Пуҫсӑрпуҫ йалканаш пуҫлӑхӗ Иванов Куҫма пайанхи кун краштанин Иванов Савелин патшалӑха ҫӗраллӑ пӑт паранкӑ ҫирӗп сатани памалла пулнӑ, анҫах ун пӗр паранкӑ та йулман,—йӑлтах шӑтӑкра шӑнса кайнине хам куртӑм, тесе ҫӑн ҫакӑ актӑна алӑ пусса, ун хыҫҫӑн пиҫет хурса ҫирӗплететӗп“.

Кун йевӗр актӑсем пӗрре ҫех мар, пит нумай Иванов алли витӗр ҫырӑнса, кӗнтселерти хулӑм „дела“ ӑшне ҫӗленсе купаланнӑ.

Ивановӑн кум Савук анҫах пулман, вӑртахсем, хунҫӑкамсем, хӑйматлӑхсем, „хамӑрӑннисем,“—пурте пулнӑ унӑн.

Ҫавӑнпа та ӗнтӗ Пуҫсӑрпуҫ йалӗнҫе пурӑнакан ҫухӑнсемпе вӑтамсем ӗсӗклесе „савӑннӑ,“ вӑртахсемпе хӑйматлӑхсем савӑнса „макӑрнӑ“...

Вӑхӑт ӗлӗкхи пекех иртнӗ ҫемӗн иртсе пынӑ. Ҫуркуннепе кун вӑрӑмланнӑ май, ҫӗр пӗтӗмпех кӗскелсе йулнӑ. Ҫавӑнпа та пирӗн Иванов ҫӗрле ҫывӑрса тӑранайманшайне, кӑнтӑрла куҫ-пуҫ ҫутипе ҫывӑрса картне лартнӑ. Тӳпере кайӑксем ҫураки кӗвви каланӑ. Иванов вӗсен кӗввине йышӑнман: —Суйаҫҫӗ вӗсем, халех марха вӑл тесе каллех лӑпкӑ ыйхӑпа ӗнтӗркесе ҫывӑрса кайнӑ.

Хӗвел хӗртнӗ пӑшатанпа хӗртнӗ пек Пуҫсӑрпуҫ йалӗ ҫине пӑхнӑ. Хӗвеле хирӗҫ йур айӗнҫен пуҫӗсене вӑларса трийӗрпа сортировккӑ пӗрин ҫине пӗри хурланса пӑхса ларнӑ.

Ҫак вăхăтрах йала прикатирсем килсе кĕнĕ. Иванов вĕсене курса шартах сиксе вăранса кайнă. Вăранса кайнă та, каланă:

— Ей, ђăн прикатирсем, тенĕ,—епĕ акă вăрлăхсене полђшевиксем пек тасаттарассишĕн ђылай тапаҫлантăм. Анђах ђухăнсем итлемеҫҫĕ. Хусамăр та пĕлетĕр, — ман пĕђђен мĕн тăвас? Арăм йывăр ҫын... Тата тĕрлĕрен кампанисем пуҫăма нумай антратрĕҫ.

— Ҫаплах пуђ ҫав..—тенĕ лешсем, „дела“ ăшĕнђе пăлхатса—Епĕр сан йăвăрлăхусене район тах илтсеђђĕ. Ҫавăнпа сана пулăшма килтĕмĕр.

— Йурат... Йурат... плахотару...

— Патшалăх вађђи тырă хăтĕрлесси, аш-какай хатĕрлес ĕҫ... тата ытти хатĕрлевсем те мĕнле пыраҫҫĕха сан, Иванов йулташ?..

— Аванах мар ҫав... Йал ђухăн вĕт...

— Кулаксене панă ҫирĕп сатанисем мĕнле пурнăҫланса пыраҫҫĕ?..

— Ҫĕркаҫ ҫекреттарпе шутланăђђĕ... 13 прођђăн тулнă курăнат... ҫирĕп сатани.

— Мĕск-е-е-е-е-р-р?!..

...Ҫапла ҫав... мĕскер...

* * *

Пуҫсăрпуҫ йалĕнђе епĕ нумай пулмаст пултăм. Хаљ йал йатне улăштарса „Ҫĕнĕ вăй“ йат панă. „Ҫĕнĕ вăй“ 37 хуҫалăхпа пĕрлешĕнсе ҫĕр кастарнă.

—Иванов хăйматлăхĕсен камантине кăкласа пăрахсан, пирĕн йал йалтах урăхла сывла пуҫларĕ. Ҫапах вĕсен тымарĕсем йулкаланăха. Анђах вĕсем пирĕн ĕҫе ђăрмантарма пултараймаҫҫĕ. Пирĕн вăй ҫирĕп. Пирĕн йыш кулленех ӳссе пырасси шанђăкра, тесе савăнăҫлăн калаҫрĕ манпа „Ҫĕнĕ вăй“ колхосăн претҫетаттĕлĕ.

# Сахвине тăхлађă

Тĕлĕкĕн йулашки тупсăмне Сахвине тăхлађă ыррăн тавçăрса илеймесĕрех, хăлхи айне ђан çаппă сасă йантăраса кĕрсе кайнипе, тутлă ыйхинђен вăранса кайрĕ. Вырăнĕ çине тăрса ларса анаслапă май, çавракан карăлнă тута хупăлђийĕсем çине хĕрес хывса илђĕ те, тӳрех кутник сакки патне çемçенĕн йăпшăнса пырса, çӳпçерен кĕлле кайма хĕр ђух йатарласах çĕленĕ шур аркăллă улађа кĕпине тăпăлтарса кăларса, йусавлăн тăхăнса йађĕ.

— Йакăп ан систĕрђђĕ, тесе илђĕ ăшĕнђе.—Йакăп сиссен вăрçмасăр кăларса йамастех вăл мана. Вăрçса хирĕлсэ кайни вара вăл кĕлле кайни те мар... Ун ђух̆е çылăхсем çырлахасса ан та ĕмĕтлен... Туррăн перекэтлĕ ырлăхĕ... иксĕлмест иккен нихăçан та. Ђутах аслă типĕре кĕлле çӳреймесĕр йулаттăм.

...Çав вăхăтрах ђан çапнă сасă сасартăк йантăрама ђарăнса илтĕнми пулса ларђĕ. Хыпаланат̆. Хăшкăлђăка ӳксех васкат̆ тăхлађă. Вăл туйа тытса алăкран тухса кайнине, кăмака çинђе ыйхинђен вăранса анасласа ларакан кушак аçисĕр пуçне, никамах та курса йулаймарĕ.

Тулта çанталăк уçă та лăпкă. Ирхи сывлăмăн уçă сĕткенлĕ сывлăшне Сахвине тăхлађă кăмăллăн ăнтăхса кăкăр туллин хаваслăн çăтса пырат̆. Хĕвел тухнă. Тухнă та сарăлсах çитейменха... Çавăнпа унăн пайăркийĕсем те ав сарă çут шупканăн палăраççĕ. Тин çех папкаланса йешере пуçланă йăмрасен тăрринђе шăнкăрђăсем йĕкĕршерĕн парăлтатса, çĕнĕрен-çĕнĕ йурăсем кĕвĕлесе лараççĕ. Ђан çапнăшăн хаваслайса йурра шăрантараççĕ пек тăхлађăшăн вĕсем те.

Тăхлађă утат̆... Васкат̆:—Ĕлкĕресђĕ... тен пайан каçарттаракансем йышлăн пулĕç. Маларах ђерете тăрасђĕ. Йулашки ерне вĕт. Калăмăн йулашки хăрушă ерни. Мĕн тĕрлĕ асапсем тӳсмен пуљ пирĕншĕн çак йулашки ернере пĕртен пĕр аттемĕр—Христус. Çапах ăна манаççĕ. Пирĕн Йакăп та çылăха пĕлмесĕр çамрăк пуççипех ăна темĕн те пĕр калат̆.—Çук, тет...

Пулман та вăл, пулма та пултарайман, тесе йерĕпкесĕр сӳпĕлтетет. ...Вăл пулман-пулсан ҫĕлхӳ те калаҫаймĕ... пурнайман та еппин тепĕр тесен...

Ҫавăн пек шухăшлă сăмахсемпе килĕнҫен тухса, мĕн ҫиркӳ патне ҫитеҫҫенех шăппăн мăкăртатса пынă Сахвине тăхлаҫă.

Икĕ ҫулҫҫен ҫиркĕвĕн ҫанĕ пĕр ҫапăнмасăр ларса, пайан шурăм пуҫ ҫутипех уҫҫăн йантăрани ăна хаваслантарнă. Ҫавăнпа та йапшаррăн утăмласа вăл ҫиркӳ патне пырса тăҫĕ.

Ҫарăнҫĕ... Пăхат... Ҫиркӳ умĕнҫе кĕпĕрленсе тăракан халăха курсан, темĕскер шухăша кайса вăл йулхавлăн анасласа илҫĕ.

Вара маха кĕсем кунта ҫак тери кĕпĕрленсе тулнă? Акапуҫĕсене мĕнма илсе килнĕши?

...Тен ҫăнах ҫапла пуҫ. Пĕлтĕрсенҫе калхусăн ҫылăхлă ҫĕрĕсепе сухаласа вараланнă акапуҫĕсене пайан ҫиркӳ уҫăлнă хаваспала ҫветтит тутарса тасатаҫ пулĕ... Ку тыррисене мĕнма тийесе килнĕши тата? тет тăхлаҫă, тийевлĕ вăрлăх лавĕсем ҫине куҫласа. Тен турра тырă парса парне кӳреҫҫĕ пулĕ. Йе паҫăшки, тин ҫех килнĕскер, петҫакрах пуҫ, ҫавăн ваҫҫи тийесе килнĕи тен вăл тырăсене...

Пĕлместĕп. Тен пĕлтерĕҫ...

*
* *

— Йакăп!.. Йакăп аҫам!?..—тесе хыттăнах каласа хуҫĕ тăхлаҫă, Йакăп трипунă ҫине улăхса кайнине курсан.—Йакăп!.. Мĕскерха есĕ?..

— Туйатăп. Сисетĕп, ассане,—калаҫат Йакăп.—Есĕ те, пирĕн ав пайан хаваслă. Ватă пулин те, поҫшевикла хатĕрлĕхе тухса курмасăр пайан сан ҫĕрӳ ҫăтаймарĕ. Кур... Савăн, хĕпĕрте!.. Ĕлĕксем ес ҫылай тертленнĕ. Сирĕн тертре пĕр хĕрхенмесĕр ĕмсе пурăннă ҫак ҫиркĕвĕн тарҫи—вăрăм ҫилхе... Йултапсем!.. манăн ватă асанне те пайан епĕр акана мĕнле хатĕрленсе ҫитнине тухса курмасăр килте ҫăтса ларма пултараймарĕ.

— Вара мĕнле акана?—тесе ыйтрĕ тăхлаҫă плукă ҫумĕнҫе тăракан колхоҫнĕкрен.

— Пайан епӗр акана кайатпӑр... Ҫавна калаӑ...

— Мӗнма ҫан ҫапрӗҫ апла тӑк?..

— Хаљ ку пирӗн ҫиркӳ каланҫа вырӑнӗнҫе пулаӑ. Малашне кашни ирсеренех ҫан ҫапса колхоҫнӗксене ӗҫе йыхӑратпӑр.

Сахвине тӑхлаҫӑ тек те текех ытлашши каласса тӑмарӗ. Туйине киле май ҫавӑрса, хӑвӑрттӑн шутарҫӗ.

— Вара мӗскер капла... Ӗнтӗ мӗскер?.. Ватӑлса пӗркеленнӗ тута хупӑлҫиййӗсем хурлӑхлӑн мӑкӑртатнӑ май хутлана-хутлана салхуллӑн хупланса ларҫӗҫ.

Ҫанталӑк уҫӑ та, ырӑ—калама та ҫук. Тин ҫех тухса сарӑлса ҫитнӗ хӗвелӗ хӑйӗн шупка пайӑркиййӗсемпе хӑлаҫланса улӑм ҫийлӗ лупассем урлӑ кармашнӑ май, урамри папкалана пуҫланӑ йӑмрасен тураҫӗсене ҫӑштӑртаттарса кӑмӑллӑн йалкӑшса аҫашлат.

Тӳпере тӑррисем ҫӗвӗлтетеҫҫӗ. Вӗсем:—Трилле, трилле-еллӗр...—тесе йурланисем тӑхлаҫӑшӑн—„аслӑ типӗ йаҫӗпеле кӗлле ҫӳреймерӗн“ тенӗ йеверлӗнех кӗвӗленсе илтӗнеҫҫӗ.

* * *

Тепӗр ирхи ҫанталӑкӑн сӑнсӑпаҫӗ те ӗнерхи йеверлех пулнӑ. Сахвине тӑхлаҫӑ Йакӑпран маларах вӑранса кӑштӑртатса утса ҫӳренӗ.

— Тӑр, Йакӑп!.. ҫан ҫапаӑ... тӑр!..

— Хаљ ҫан мӗскершӗн ҫапнине пӗле пуҫларӑнам,—тет Йакӑпӗ.

— Пӗлтӗм ӗнтӗ... Хаљ куртӑм. Усӑсӑр лартаҫҫен капла аванах ӗнтӗ. Аттуха так ахалех халтӑраса ҫакӑнса тӑраҫҫӗҫ... сана кӑнтӑрла тума темӗскер парса йарасха... ни ӗни пӑрулаймарӗ... йур-варсӑр пета кансӗр.

— Апат кирлӗ мар мана.

— Ураса тытас тетӗним?..

Уйри ӗҫ вӑхӑтӗнҫе пӗрлешӳллӗ апат ҫиннине Йакӑп каласа ӑнлантарсан тин асламӑшӗ ӗненсе хавасланҫӗ.

—Апла пӗрре пырса курасха унта...

# Çтаппан купăс калаŤ

...Çытма йĕмпе ђупакан ађаран пуçласа шăлсăр карђăка çитеђђенех палланă ăна йал-йышсем.

Пĕлкеленĕ Çтаппана таврари йалсем те. Пуринђен ытла çамрăксем хушшинђе Çтаппан авторитеђĕ паллăран та пеллă вырăнта тăнă.

Хĕрсем йуратнă Çтаппана... Анђах вĕсен йуратăвĕ унăн вуник картлă хут купăсĕ йенелле ђылайрах сулăннă.

Вара, ђăнах та, йеплеха йуратмăн çав тери йантăравçă купăса?! Йалта купăс калакан сахал. Вĕсем пулсан та, йе авланнă çын, йе тата пурте Çтаппан пек çамрăксене килĕшӳллĕ кĕвĕсем калаймаççĕ.

Çтаппанăн купăсĕ çĕтĕлерех панă пулсассăн та,—сасси аванха унăн... Вăл ăна, мункун ернинђе штопă песпрерывнă калама тӳстĕр тесе, мункунђђен виçĕ кун малтан йусаса хуђĕ.

„Ремонт“ панă вăхăтра ăна амăшĕ мĕнле кăна ĕç хушнă пулсан та, вăл йалан амăшне хирĕç пынă. Купăс вĕт-ха!.. Купăс пуç çинђе!.. Вара амăшĕн ирĕксĕрех сăра вутти татма та кӳршĕ Ахванеç ăђине илсе каçмалла пулнă.

Ремонта алла илсен виççĕмĕш кунне купăс йăлтах урăхла тĕсевлĕ пулса тăнă.

— Йепле алурапа кăна йусанă?! Купăс маçтăрĕ те кун йевĕр илемлĕ тума пултарайас çук,—тенĕ йалти çамрăксем. Çтаппан савăннă.

Ђăнласах та йепле илемлĕ йусанă. Шăтăкĕсен тĕлне хутпа сапланисем курăнмаççĕ те... Вĕсене вăл шал йенђен ђустапа сĕрсе çыпăçтарнă. Купăсăн айакĕсем çине пăхрăн тăк: хăвăн сăнна çаплипех курма пулаŤ. Купăс айакĕсем çумне çыпçăннă куçкĕски татăкĕсем. тин çеç йур айĕнђен хĕвел пĕçертнине ђăтаймасăр йăраланса тухнă трийĕр сăнĕ пек йалтăраса тăнă.

Савăннă Çтаппан... Тӳпери хĕвел тата пушшĕ савăнса, хăйĕн темиçе километтăрлă пайăркийĕсемпе хăла çланса Çтаппанăн купăсне тытса каласшăн пулнă

Анђах Çтаппан паман. Вара хĕвел ним тавайман йӗнне купӑс карђĕсен хушшинђен пӑхса, Çтаппанӑн кӑкӑрĕ çине асамат тĕрри ӳкернĕ.

* * *

Калӑм ерни тӑсӑлнӑçемĕн тӑсӑлнӑ. Кунĕсем мĕнле кӑна вӑрӑм пулнӑ пулин те, çапах Çтаппаншӑн сисĕнӳсĕр иртсе кайнӑ вĕсем. Вӑл йалан çамрӑксемпе шапӑлтатса купӑса тӑсса вӑхӑта ирттернĕ. Анђах, çапах та, Çтаппанӑн пуçĕнђен пĕр шухӑш кайман. Вӑл шавах Лисӑ çинђен шухӑшлӑса, хӑйĕн сар çӳçлĕ пуçне тĕрлĕрен ыйтусем панӑ. Ах, шеђмӑ пуçĕ!.. Лисӑ ђипер тенипе ђипер çав... Ирĕксĕр ун çинђен шухӑшласа пуçна ангӑратӑн.

— Ђӑнахах та, мĕнма вӑл ман йенне хаљ питех çавӑрӑнса пӑхасшӑн мар-ха... Мĕнма тата хӑй çак аслӑ калӑм йађĕшĕн çармӑксен хушшине тухса ларса тапӑлтатасшӑн çунмасть?..

Çав хушӑрах Çтаппана ђĕрене туртӑнтарса ыраттаракан сӑмах, Лисӑ сӑмахĕ, татӑклӑ сӑмах ӑсне килет.

Пĕрне-пĕри савса уйӑрӑлми йĕкреш пек виçĕ çул хушши пурӑннӑ хыççӑн, иртнĕ çимĕк каçĕ:—пирĕнпе пымастӑн пулсассӑн, есĕ ман мар, есĕ тĕп кахал,—тенĕ сӑмах çамрӑк та илемлĕ Лисӑ ђĕлхинђен татӑлса тухса, Çтаппан ђĕрине арман ђулĕ пек кĕрсе вырнаçрĕ.

Çтаппан ӑнланайми çын мар, анђах, пĕр йенђен çамрӑкрах майпа пурнӑçа пурӑнса курайманни, тепĕр йенђен—амӑшĕн сӑмахĕнђен тухманни ӑна хупланӑ. Лисӑн татӑклӑ сӑмахне вӑл çавӑн ђухнех тавçӑрса илнĕ. Лисӑ ӑна пĕрлешӳллĕ çемйене хутшӑнса, хӑйпе пĕрле çĕнĕ уйра ĕçлеттересшĕн пулнӑ. Çапах вӑл пайан кунђен те çак татӑклӑ сӑмаха пурнӑçлайман.

* * *

Танкӑлтатса ђан кĕрлени илтĕнмест пулин те, ахаљ ђух тӳп-тӳрем утса çӳрекен етемсен урисем хуçкаланнипе пĕвĕсем тайкаланни калӑм хисепне кӳнĕ.

Çтаппана та хӑй пек йулташĕсем килĕрен-киле кĕртсе хӑналатса çӳренĕ. Сӑра ĕçтернĕ... Ерехе Çтап-

лан парсан та ĕçмен. Ăна Лисă ĕçме хушман çке-ха. Лисăпа курнăçманни çур çул ытларах пулсан та, вăл ун сăмахĕсенҫен тухса кайасшăнах марха.

Унăн йулташĕсем „тăхăр кукăр" пыраççĕ пулсан, Çтаппан тӳп-тӳрех утса, купăса макăртса пынă. Вăхăт-вăхăт купăс миххине çмиллăн туртса илсе, уçă сывлăша хаваслăн йантăратнă.

Сасартăк Çтаппанăн сар çӳçлĕ пуçне темĕнле шухăшсем пăтрата пуçларĕç. Акă вăл, çамрăксем хушшинҫе купăса тăсса ларнă хушăрах, йăмра тăрринҫе кăраклатакан кураксем çинҫен куçне илмесĕр пăхса тăрат.

— Ҫăнах, кураксем турă кайăкĕсем пулас пулсассăн, мĕнмаха çак аслă калăма хисеплесе, пирĕн пек уйавламаççĕ. Епĕр ернипех „хăмпă çапса" ирттеретпĕр пулсан, вĕсен те йăва çавăрма пăрахмалла пекçке...

Кураксем калăма пăхмасăрах ертелпе шакăлтатса ĕçлени Çтаппана тĕлĕнтернĕ.

— Лисă та çавсен хăраххийех!..—тенĕ вăл кăмăллăн тарăхса... Çавсен хăраххийех...

Сулхăн çил Урут тăвĕ йенҫен вĕрсе, урамра ларакан ҫипер хĕрсен хвелҫамăш кавлесе йăлмаланă пĕҫĕк тутисене капăштаттарнă. Çтаппан купăсĕн сассине те çил хăйне май илсе кайса, таçти катари кассене кас-кассăн илтĕнтернĕ.

Урампа мушиксем вĕçĕмсĕр танкăлтатса утнă.

„Тлиҫот, талиҫот!" кăшкăрнă хăшĕсем. Оплнкатсн пама пырсан пĕр пусшăн тупа тăвакан Тимахви те пайан „мухтав йурри" йурласа пынă.

Çавăн пек условисемпе иртсе пынă калăм ерни... Çавăн пек иртнĕ вăл ĕлĕкрех те...

* * *

...Мĕн усă паҫĕ-ха мана ку калăм?..—тесе ыйтнă Çтаппан... Çтаппанăн аллинҫе ӳсĕрсен хурри пулнă купăсăн шăтăк миххи шăнкăрҫă йăви пек тăлăхăн тăнă.

— Иксĕмĕр икĕ уйăх ҫиĕс ҫăкăр-тăвара „тăвансем" ĕмсе кайрĕҫ,--тенĕ амăшĕ.

Ҫтаппан салхуллăн кулса йанă.

— Анне! пăшалстă ҫын пек пурăнар-ха... Ҫын пек... Ак пример: Сахарсем пек... Сахар та ман пекех. Тата ҫитмен йенне унăн амăшĕ те ватă. Хаљ епĕр иксĕмĕр те ĕҫлеме пултаракансем... тепĕр уйăхран, спаш, выҫă ларма шутлатпăр пулаť.

Сахар иртнĕ ҫулта ĕҫлесе мĕнђухлĕ тырă илђĕ. Тăранмаллăх та, тумланмаллăх та пур. Пурте тавуљнă вĕсен. Тата кăҫал авланма та шухăшлаť теҫҫĕ.

— Вара кĕрсе те кĕрĕттĕмĕрђђĕ те, ытла кахалсем нумай теҫҫĕ вĕт-ха унта...

— Ҫук, анне!.. Пĕркун аслă пухура пуҫлăхĕ хăй каласа пађĕ. Кăҫал иртнĕ ҫулхисем пек мар. Кăҫал кашти сынна уйрăм ĕҫ параҫҫĕ. Вара кашнăйĕшех хăй ĕҫĕшĕн ответлă пулаť...

Ђылай ăнлантарђĕ амăшне... Ђылай каларĕ... Йулашкинђен Ҫтаппан аллинђи шурă хут ҫинђе кукăркалатса ҫырнă саспаллисене хутшăнтарса вуласан, „**Мана икĕ йатапа колхоса илме ыйтатăп**", тесе ҫырнине пĕлме пулђĕ.

* * *

Ҫанталăк шăп. Каҫĕ ытлах ҫутах пулмасан та, шупка уйăх хăйĕн ҫутă саркăм сăнне колхосра пулас електăр ҫутилле нӳрĕк ҫĕр ҫине сапалаť.

Кăнтăр йенђен вĕрекен ăшă ҫилĕ йывăҫ пахђинђе ларакан икĕ ҫамрăкăн пит ҫăмартийĕсене лăпкăн ађашлаť.

— Такҫанах ҫапла пулма сĕннĕђђĕ сана еп...

— Есĕ утарнĕтсă пулсассăн, епĕ те...

— Епĕ санăн пулсассăн, есĕ...

Ҫапла савăнса шĕкĕлтетсе ларнă Лисăпа Ҫтаппан. Ҫапла хушнă пурнăҫ.

Вăхăт-вăхăт Лисăн ҫӳхе тути йăл-йăл кулса илнĕ. Мерђен шăрҫа пек икĕ хура куҫĕ Ҫтаппанăн шурă таса пиђĕ ҫинђе вăй выљанă.

Икĕ телейлĕ çамрăк... Çĕн пурнăçăп телейлĕ керореçем...

Вĕсем йывăç пахҙинҙе савăнса ларнине шупка уйăхсăр пуçне никамах та курман...

1931 çул.

---

# Пайан

Умра аслă уйхир. Йăрансăр та, тем сарлакăш. Ăçта вĕçĕ!? Ăçта хĕрри!? Хĕвеланăç йенҙен вĕçле çил вĕрсе, анлă уй кĕреки çийĕпе хум хыççăн хум хăвалаҭ. Сĕлĕ шерепийĕ куçа ылттăнăн курăнса, ĕмĕтлĕ шухăш пуçа хаваслăн ыталаҭ.

Хăлаçланса шатăртатаҭ çĕнĕ шнейккă. Шнейккăна кӳлĕннĕ лашасем хаљ-хаљ ĕрĕхсе кайалла талпăнаççĕ. Хăмăш хăмăллă сĕлĕ пĕр тикĕссĕн касăлса çыхакансен умне ывтăна-ывтăна йулаҭ.

— Çикнал!..—терĕ Христан лашасене ҙарса.

Çавăнтах пĕр шурă тумланнăскер апат тийесе килнине курсан, пурте ĕçĕсене пăрахса, тарпа хуралнă питкуçĕсене çуса шăлăнҙĕç.

Шăрăх... Тӳпери хĕвел кахалăн йулашки хевтине йулашки хут пăҙăркаса, типĕтем тенĕ йевĕрлех пайăркийĕсемпе хăлаçланса вĕтелет.

Шурă тумланнăскер ĕçлекенсем хушшинҙе кайăкла йăпăртатса çӳрет. Пăттине хатĕрлет, çăкăрне ваклӑ, ăна тăвӑ, кăна... Пĕр сăмахпа каласан—вăл колхоçнĕксен ĕç вăхăтĕнҙи амăшĕ.

--Та... Пайан пĕр шнейккă пуçне 9 кектарне çавăрса çапатпăр,—терĕ Христан кулкаласа, çăварĕнҙи çăкăрсе ҙăмланă май.

— Тохта полттара трутотен илетĕри мĕн?..—ыйтрĕ прикатир текенни.

— Та... вçе восмошнă.

— Пирĕн виççĕр кĕлте çыхмаллаиха?..

-- Виççĕр...

— Пайан икçĕр çыхнă еп... каçҙен тата икçĕр ирĕккĕн... шухăшласа илҙĕ ыйтакан хĕрарăм.

— Ах, пӗлтӗр... Пӗлтӗрхине аса илсен,—терӗ Христан хӑй ӑшӗнҫе. Ҫавӑнтах ӑна „кахал Куҫмин" хӑтланҫӑкӗ тӗлӗнтерет. Вӑл ытла та сӗвенкелле кӑна ӗселенетҫӗ-ҫке пур ӗҫре те... Кӑҫал пӑхха!.. Хыҫне вут хыпнӑ тейӗн. Пур ӗҫе те пуринҫен малтан туса ӗлкӗртсе пырать. Ыйхине те канлӗ ҫывраймасть тен.

Вӑлах вӗт утарнӗк...

Христанӑн пуҫне тӗрлӗрен шухӑшсем ыталаса илеҫҫӗ. Ыталаса илеҫҫӗ те, ҫӳҫ тункатисене ҫӗтрентереҫҫӗ. Йалан вӑл пӗлтӗрхине аса илет. Ӑна нимпе те манаймасть. Вара йепле-ха манӑн. Карттинӗ пурте куҫ умӗнҫе.

Ҫапла пӗр ирхине хӗвел йаланхи пекех темиҫе километтӑр пайӑркийӗсене ҫалтӑртаттарса ҫӗр ҫине хӗлхем сапаланӑ. Христан арӑмӗ, Кулине, йашка антарнӑ ҫӗртен сасартӑк ҫухӑрашу сасса илтсе, кутник патне те ҫупса ҫитейменунӑн икӗ аҫи те урайне персе анса йун йухтарса тапаҫлана пуҫланӑ.

-- Мӗскер есрӗмеҫӗ!.. Ех, ҫарусӑр муклашкасем! Ыйхисене те ыррӑн ҫывраймаҫҫӗ.

— Ласана памаста.. а.. а...—ыйхи тӗлӗшӗпе ӗсӗклесе илҫӗ Ваҫук, сӑмсинҫен палкаса тухакан йунне ҫанни вӗҫӗпе шӑлса.

Ҫав вӑхӑтрах Кулинен сӗтел ҫинҫи турилкки персе анса, ҫиме ӗмӗтленнӗ ирхи апаҫӗ урайне сапаланнӑ

— Прукҫаттӑй кушакӗ!.. Есӗ тата йашканан?.. Ҫатма аври ҫӗкленӗ Кулине кушак аҫине ҫав тери ҫиленсе вирлӗн ҫапасшӑн пулҫӗ. Анҫах калӑпӑр—каллех кушака телей. Ӑна ҫапас тесе ҫӗкленнӗ ҫатма аври алӑкран кӗрекен Христанӑн мӑкӑр ҫамкинех пырса тирӗнҫӗ. Христан ҫавӑнтах каскалла йӑванса тӳнҫӗ. Йунлӑ сӑмсасем тата хытӑрах ҫухӑра пуҫларӗҫ.

— Епӗ сан айна пулма-и?—ҫивӗт тунинҫен йавса антарҫӗ Христан Кулинене.

— Тархасшӑн ӑнлан-ха... ӑнлан...

— Мӗн вара?—вӑхӑтсӑр тилӗрсе кайнӑ Христан аҫисем ҫине пӑхса илҫӗ.

Мӗнле мӗн икконне Кулине йӗрке пӗрӗн ӑнлантарса парсан. Христан ахӑлтатса кулса йӑрасшӑнҫӗ те

анҫах уйа выҫ хырӑмпа кайассине аса илсен калассине ырана хӑвармалла пулҫӗ.

Малалла Христанпа Кулине ҫинҫе сӑмаха тек текех кунҫаламасан та йурать пулӗ. Вӗсен мыскаринҫен уйри колхоҫнӗксем лӗҫ ҫапса кулни—кирлех те мар. Христанӑн ҫатмаври хыҫҫӑн хаҫ-хаҫ пиҫес пӑмитурла мӑкарӑлса тухнӑ ҫамки ҫинҫен те ҫарӑнса тӑмӑпӑр.

Христансене вӑл кун уйри колхоҫнӗксем кӗте-кӗте йалтах супнӑ. Вара вӗсем кӑнтӑрла умӗн аран-аран йӑраланса ҫитнӗ. Мӑйран уртӑннӑ хутаҫ, аларӑ уйран ленкесе Христан тӑлпӳне ҫӗрелле туртӑнтарса, пӗкӗ йевӗр авӑнтарнӑ. Ун хыҫҫӑн Кулине пӗр аҫине пӗҫӗк урапапа, тепӗрне алӑра йӑтса ҫитмӗл те ҫиҫӗ лӑт ҫакнӑ тӗве йевӗр мекӗҫленсе пынӑ.

...Ҫавсене аса илсе тӗлӗрет пайан Христан. Ҫавсене аса илсех вӑл ҫамкине те хыпаласа пӑхрӗ. Анҫах палли ҫук... Халиҫҫен пӗтне ӗнтӗ вӑл. Вӑл пулса иртни пӗлтӗрех вӗт, пӗлтӗрех. Христансен колхосӗ пуҫланнӑ ҫулах.

Йаланах ҫанталӑк та пӗр манер тӑмасть̆скеха. Ҫавӑн пекех пурнӑҫамӑр та улшӑннӑҫемӗн улшӑнса ҫӗжелнӗ май, лайӑхлансах пырать̆.

Пайан Христанӑн Ваҫҫукӗсем те ыйхӑ тӗлӗшӗпе аташса сӑмсисене ҫӗмӗрсе пӗтермеҫҫӗ. Пӗҫӗк урапапа, йе алӑра йӑтӑнса хире ымаҫҫӗ вӗсем... Вӗсем йаҫлӗре... Вӗсем тӗрлӗ ҫеҫеклӗ сӑрлӑ сетел хушшинҫе теттесемпе выҫаҫҫӗ. Хырӑм—тутӑ, ҫи—питӗ... Христан та, Кулине те кирлӗ мар.

Канлӗ Кулинепе Христана та... Вӗсен пирки апатне те пайан кушак аҫи тапӑнмасть̆. Вӗсен апаҫӗн ответлӑ хуҫи—таса та шурӑ тумланнӑскер.

* * *

Ҫикнал иккӗмӗш хут ҫухӑрсан, колхоҫнӗксем капӑрах тӑрса ӗҫе пуҫӑнҫӗҫ.

Христанӑн лашисем ӗрӗхсе кайас пек талпӑнаҫҫӗ. Хӑлаҫланнӑ май, шнейккӑ кӑлтӑртатса—„тӑхӑр кектар, тӑхӑр кектар,—полтгара", тепӗ йевӗрлех илтӗнсе ҫуна хавхалантарать̆.

# Йепле хатӗрленеҫҫӗ

Пушталӯйун ӑна ҫыру, тата хаҫат тыттарса хӑварнӑ ӯухне вӑл тин ҫех ыйхинӯен вӑранса каркаланнӑ май, анаслаласа ларнӑ пулнӑ.

— Хей, мур пуҫӗ... Халех ҫыру йаӯӗ пулатимха. Йк-виҫ каҫ малтан ҫеҫ хӑйне курса калаҫнӑӯӯӗҫке,— тесе кулкаласа илӯӗ вӑл хаваслӑн.

Анӯах, анӯах ҫав...

— Мӗскер?!.. Каллах отношшени. Нивушлӗ епӗ хамӑнне-хам ӗнтӗ пӗлместӗп? Ну-и тарӑхтараҫҫӗ те.

Ӯӑнласах та тарӑхмалли пур ҫав. Отношшени ҫине отношшени килет Макҫимаӯнӑв патне. Йалан пӗр ҫӗртен—райҫутӗҫнайӗнӯен ҫыраҫҫӗ.

Пӗр ҫӗртенни йурӗха вӑл та... Мӗншӗн йалан пӗр ыйтупа пуҫа антӑратаҫҫӗ?.. Ҫавӑншӑн тарӑхать ӗнтӗ пирӗн пайанхи керой Макҫимаӯнӑв. Тарӑхсах вӑрҫать вӑл ҫутпайӗнӯисене. Тарӑхсах вӑрҫса, тарӑхнилех вӗсен отношшенине йулхавлӑн вулама пуҫларӗ.

„Поҫлетни рас сана, Макҫимаӯнӑв йулташ, РОНО претлакайӗт шкулти йӗркесӗрлӗхсене пӗтерме. Отпускӑпа кайран усӑ курасси ҫинӯен сана не тоӯккӑ первӑй рас каланӑ. Оп еттӑм вӗт иртнӗ отношшенисем ҫинӯех питӗ аван скасал. Шкулти парттӑсене..."

Ыттисене Макҫимаӯнӑв вуламарӗ. Ма тесен—унта малалла вара наӯар йапаласем ҫинӯен ҫырса кайнӑ. Вӗсем ҫинӯен камӑн хаваслансах вулас килӗ ӗнтӗ!..

— Ӯӑвашлах ҫыраҫҫӗ тата хӑйсем. Иртнӗ отношшенийӗсене вырӑсла ҫырса йанӑӯӯӗ,—тесе тӗлӗнем пекки пулӯӗ Макҫимаӯнӑв РОНО-рисем „ӯӑвашланса" кайнӑран.

— Хаҫат мӗн калать тата, хаҫат?..

Хаҫата ҫавӑркаласанах ун ыйхӑпа тӑртаннӑ куҫне „ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулӗ" ҫинӯен ҫырни курӑнса кайрӗ.

„Ӯи аван, ӯи пысӑк, ӑшӑ ҫурт—шкул ҫурӯӗ пулмалла. Пирӗн аӯасен сывлӑхне упрассишӗн тӑрӑшмалла, вӗсемшӗн епӗр сотсиалисӑм тӑватпӑр."

—Вĕсемшĕн тăватпăрхата... ман аҔам та ҫук,—терĕ Максимаљнăв:—кунта ман пулас арăмăн аҔи ҫинҔен те каланă пулĕ те, ну, ытларах вĕренекен аҔасем ҫинҔен ĕнтĕ каланă.

„АҔасене вĕренме сахал мар кĕнеке, хут, кăранташ, т. ыт. те кирлĕ. Кусемсĕр пуҫне парттăсем, класри тускасем, сĕтелсем кирлĕ.

Ҫак йапаласене ҫĕнĕ вĕренӳ ҫулне кĕреҔҔен йăлтах хатĕрлесе хурас ĕҫре йалканаш пуҫлăхĕпе шкул пуҫлăхĕ ответлă пулаççĕ.“

Максимаљнăв хаҫата хутларĕ те, Ҕавсине йанахĕпе Ҕăркуҫҫи ҫине Ҕараклантарҕĕ. Шухăшлаť. Ытлашши утарлă хăвăртлăхсемпе шухăшланăран пуљ ахăрнех,—куҫне темĕскерсем курăна пуҫларĕҫ.

... Хуҫăк уреллă парттăсем вутшанкă йевĕр купалanca выртаççĕ. Ак „инвалит“ сĕтел,—виҫĕ уралăскер. Сунтăхĕ тухса ӳкнĕ,—унта „вилнĕ“ таракансем акатуй йарса сӳреççĕ.

Акă тата пахҔа. Шкулăн пахҔи... Йепле илемлĕ те, хитре!.. Вăрман пек кашласа лараççĕ мăйансем. Вĕсен айĕнҔе тĕрлĕ ҔеҔеклĕ ĕҫме-ҫимĕҫсем. Ҫынсем ҫеҫ мар саваççĕ ҫакă пахҔана.. ав сыснасемпе каҔакасем те пуљварти йевĕр, улма-купăста йăранĕсем тăрăх ҫавтăнса сӳреççĕ—„калаҫса“...

— Та...а...—терĕ Максимаљнăв. Куҫ умĕнҔе нимĕн те ҫук... пӳртрех ларať вăл. Вăйлăн шухăшласа ларнăран иккен леш инкеклĕ йапаласем ун куҫне курăннă.

— Ҕăри-и-инк!.. уҫăлҔĕ пӳрт алăкĕ.

Йалканаш пуҫлăхĕ кĕрсе тăҔĕ.

— Сторовă!?.

— Сторовă та-ха... айта-ха Ҕасрах тархасшăн. Иксĕмĕре те намăслантарса тинкене илеҫ унта.

— Камсем?..

— Мĕн камсем... ЙанкассинҔи пионер отреҔĕ пирĕн йалти шкула шефа илнĕ. Вĕсен вĕренӳ ҫулне йăлтах хатĕрленсе ҫитнĕ тет. Ыран-пайан вĕренӳ ĕҫне пуҫăнмалла вĕт. Ни есĕ тăрăшмастăн, ни епĕ те... те... те...

— Мĕнпе вĕрентме пикененха унта халех. Тетрадсем те, кĕнекесем те ҫителĕксĕр,—тет Макҫимаҍнăв хуйхăравлăн.

... Ҫитмеҫҫĕ ҫав, ҫитмеҫҫĕ. Вăл та ҫук, ку та... Шкулăн ҫурҍĕ те вĕт ĕретлĕ мар. Хĕлле пулсассăн ак сивĕ ҫилĕн ҫухăракан „ăварĕсем“ ҍикеленсе кĕрсех кайаҫҫĕ пĕрене хушăкĕсенҍен.

— Хĕлле халех пулмасӗха вăл та...

Ҫапла ҫӳпĕлтетсе пыраҫҫĕ икĕ пуҫлăх,—пиҫсе ҫитеймен пуҫлăхсем. Вĕсем шкул йепелле сулланҍ ĕҫ

* * *

Шкул умĕнҍе кĕпĕрленсе тăракан Йанкасси пионерĕсем пуҫлăхсене отреҍĕпех халавлăн хирĕҫ тухса илҍĕҫ.

Вошаттăй калаҫат.

—Кунта сирĕн вĕренӳ ҫулне хатĕрленес ĕҫ йĕркин меслетлĕ тупсăмне такам амакĕ ҍăмласа лартнă.

—Каҍакасем ҍăмланă пуљ,--тет пионерсенҍен пĕри

— Вĕсем мар,—тет Макҫимаҍнăв.

— Хатĕрленмелле пулнăха ăна та,—тет йалканаш пуҫлăхĕ.

* * *

Тепĕр ернерен епĕ район ҍенттăрĕнҍе пултăм. Унта хура, хĕрлĕ хăма.

Хура хăма ҫинҍе йалканаш пуҫлăхĕпе шкул пуҫлăхĕ Макҫимаҍнăв пĕҫҫи-каҫҫисене ҍармакаланса выртаҫҫĕ.

Хĕрлĕ хăми ҫинҍе Йанкассинҍи пионер отреҍĕ. Макҫимаҍнăвсен шкулĕнҍи йĕркесĕрлĕхсене тăрă шыв ҫине ҫăлса кăларнăшăн ҍысласа кĕртсе хунă унта вĕсене.

Вара ирĕксĕрех шухăшлатăн. Йанкассинҍи пионер пырса ĕҫе хускатса хăварман пулсан, вĕренӳ ҫулне хатĕрленес ĕҫ Макҫимаҍнăвсен шкулĕнҍе пайан кун та ҫаплах ответсăрланса тăнă пулĕҍҍĕ-ши?!..

Ах!.. Йепле пулсасеăн та, капла ан пултăрах.

---

# Раман тумланҫӗ

Тӳпере хулăм та, тискер пĕлĕтсем картлам, картламăн йăсăрланса шăвăнаççĕ. Таçта кайаççĕ вĕсем. Çавăнтах тарăн шухăш ăшне путса тапаçланса ларакан Раман айĕнҫи çӳл ту та темĕскер йăшăлтатнăн туйăнса кайрĕ.

— Мĕнмаха килнĕ епĕ кунта?.. Кам илсе килсе лартнă мана çакă çӳл ту çине?..—тесе хăйĕнҫен хăй тĕлĕнсе шухăша кайса ларнă Раман. Çавăнтах тĕрлĕрен йăрансăр уйхирсем, йешĕл тумлă вăрмансем, вăрмансенҫи тарăн та хăрушă сырма-çатрасем Раман куçĕ умĕнҫен капланса иртсе пыраççĕ.

— Нивушлĕ вара çаплахха?.. Ай, ха-ай!.. Нивушлĕ пулăшмастăр?.. Нивушлĕ епĕ кунта пĕҫҫенех?!. Çийет вĕт ку, çийет!.. ырăшăнах килмест пуҫ ахăр, — тепĕ май ҫĕтренсе сивҫир тытнă пек халтăраса ларнă Раман, хăй йенелле йăраланса хăпаракан сысна аçине курсан.

Сысна йерипенĕн пырса Раман умне каркаланса тăҫĕ. Раман ăшĕнҫи халтăру кĕвви вăйлăланнăçемĕн вăйлăланса кайрĕ. Ҫĕтĕрет вăл. Шăлне шаккат. Хăмăр тĕсевлĕ куçĕсем урмăшса ларҫĕç.

— Мĕске-ер-р-р?!..—тесе хайаррăн çухăрса йаҫĕ Раман.—Мĕскер тăвасшăн есĕ?..

Сысна ҫĕнмест. Вăл хусканмасăр тăрат. Раман ăна хăйĕн сысни иккенне тавçăрса илҫĕ.

— Вара мĕнлеха,—тет Раман,—мĕнле вăл кунта килме пултарнă?.. Ăна епĕ пуснă вĕт пайан. Тирне ĕнтсе çунтарса йани те ав паллах. Кăмрăклансах вĕт кайнă.

— Харрту!—турĕ сысна.

— Мĕске-е-ер!—Çухăрса йанă Раман.

— Айта утлан!..

— Мĕскерле-ха есĕ?.. Сысна вĕт есĕ?..

— Мĕнма калаçатăн?..

— Айта утлан... Пес расковор.

Раман утланҫĕ. Сысна çил çуналла пĕрĕхтерет çех малалла... Нивушлĕ сысна?... Раман ĕненмесĕр

унӑн тирне тепӗр хут хыпаласа пӑхрӗ... Ҫавах. Пайан хам ӗнтсе йанӑ сыснах. Ӑҫта илсе кайатӑши?.. Раман ђӑнласах ађа пек макӑрса йӗрсе йађӗ.

— Ӑҫта илсе кайатӑн?... Тархасшӑн хӑвар. Какайу та, ху та кирлӗ мар.

— Айта пес расковор. Есӗ испађсен, уђитӗлсен сӑмахӗсене итлеместӗн. Айта хаљ ху куҫупа хӑвна кӑтартам.

Йӗрет Раман. Сысна ланклатса ђупнӑ май, вӑл ӗсӗклесе макӑрса пыраť.

— Пашалстӑ хӑвар. Ху пӗђђен кай. Кирлӗ мар мана есӗ.

— Харрт!.. А..а..а... Шалиш прт,--терӗ сысна. Урӑхран вӑл шарламарӗ.

... Ҫитрӗҫ ҫитес ҫӗре. Раман йӑлтах тӗлӗнсе хытса шанса кайрӗ.

Ӑҫта илсе килђӗ ку мана пӗр самантра?...

Ун умӗнђе савӑт корппусӗ. Вӗҫӗмрен тӑсӑлса ларса кайнӑ илемлӗ ҫуртсем. Савӑт тӑрринђи вӑрӑм хура трупаран ҫӑра тӗтӗм ҫӗлӗк пек, ҫӗлӗк пек палкаса пӗлӗте туртӑнаť. Ак крусовик автомопил Раман ҫумӗнђенех сӗртӗнсе иртсе кайрӗ.

— Пӑхха, лайӑхрах. Мӗн тийенӗ вӑл,—терӗ сысна.

— Тир. Сысна тирӗ,—терӗ салхуллӑн Раман.

— Тоттӑ. Сан пек ӗнтмеҫҫӗ ҫав...

Раман ђӗнмерӗ. Пӗрре савӑт ҫине, тепре хӑйпе калаҫакан кӑмрӑк тирлӗ сысна ҫине пӑхса илет.

Савӑт ӑшне кӗрсе кайрӗҫ. Ҫысна ҫул кӑтартса йертсе ҫӳрет. Ака тир. Сыснасен тирӗсем. Йепле вӗсене йакатса ҫемҫетеҫҫӗ. Акӑ тепӗр алӑк. „Екскурсантсем" ҫакӑ алӑкран кӗрсе кайрӗҫ.

Атӑ, поттинккӑ, алса тулӗсем... Тӗрлӗрен сарӑ та, илемлӗ сӑрансем купаланса выртаҫҫӗ кунта. Пурне те (лайӑх йышшисене) сысна тирӗсенђен тӑваҫҫӗ вӗсене.

Раман ытарраймасӑр уринђи ҫӑпатисене салтса пӑрахса, пӗр мӑшӑр атӑ, сӑран атӑ тӑхӑнса йађӗ.

Ҫул ҫинђе шӑнса кӳнтӗркенӗ аллисене сӑран алса тулӗ тӑхӑнтартрӗ.

Сысна ун ҫине пăхса, кăмăллăн тарăхса кулсе тăрат.

— Арăму ваҏҏи поттинккă ил,—терĕ сысна.

— Вернă, ҏăнах...

Илҏĕ Раман. Хĕстерҏĕ хул хушшине поттинккăна та Каҏҏă... Вунҫиҏ ҫулхи каҏҏă тейĕн... Хăйне тăрăххăн пăхса илҏĕ Раман.—Тумлантăм. Йепле илемлĕ те йатуллă.

Ҫав вăхăтрах Раманăн ҫак ҫула ҫитсе пĕрре атă тăхăнса курнă урин тупанĕсем темĕскер сасартăк кăтăкланса кайрĕҫ.

Мĕскерле капла?.. Раман ҫаврăнкала тăрат. Тўсейме-рĕ вăл. Урисем ыратнăҫем ыратуллăн кăтăклана пуҫ-ларĕҫ. Хывса пăрахрĕ. Хывăннă атă кĕлли Раманăн ҫамкине пырса ҫатлатрĕ.

— Акă сана!—тет атă...

— Ҫат!—тутарҏĕ пит ҫăмартийĕнҏен алса тулĕ.

Раман пĕрре хĕрелсе, пĕрре шуралса симĕс-кăвак тĕсевлĕн пула-пула кайат.

— Сан арăмушăн епĕ ҫĕленме-е-ен!—тесе йăшăл-татса ҫухăрат хул хушшине хĕсĕннĕ поттинккă.

— А-ă-ă!.. Нăри-и-ик!.— тет кăмрăк тумтирлĕ сысна.

— Виле-е-еп!—тет Раман.—Вĕлере-е-еҫ!..

— Айтаха сана ҫакса хурса купарҏуна ĕнте-е-ем!—тесе нăриклетнĕ сысна. Ун аллинҏе сарă ҏĕн урхалăх. Ҫав урхалăхпа ҫакасшăн пулнă Рамана.

Раман хытăран-хытă ҫухăрса, „тамăк" саслăн кăп-кăра пуҫланă. Ун мăйĕнҏен ҏĕн урхалăх пăвса илсен кăшкăрма ҏарăнса, инкеклĕ ыйхинҏен вăранса кайнă.

— Ăҫта епĕ, ăҫта?!..—Вăл хăрушла калаҫнине илт-сен ҫумĕнҏи арăмĕ те хăвăрттăн тăрса лампине ҫутса йанă.

— Ăҫта епĕ, ăҫта?!..—тĕлĕрсе ларнă Раман.—Ҫак-семи сарă сăран атă, алса тулĕсем,—тесе йанахне каҫăрт-са пăхса ларнă Раман ҫтена ҫумĕнҏе сарă сарах-ванлă таракансем перкĕшмелле выҏанине курсан.—Мĕскер аташатăнха?—ыйтрĕ мĕлке ҫуҫлĕ арăмĕ.

Раман хăйĕн тĕлĕкне арăмне йăлтах каласа парсан, арăмĕн поттинккăшăн тимсĕлсе тăракан ури тупанĕсем хаваслăн кăтăкланса, хурлăхлăн хытса ларђĕç.

— Вăрмана кайма алса тулĕ пулђĕ тесе хĕпĕртенĕ ђђĕ те,—терĕ Раман.

— Çаплађђĕ те!—çирĕплетрĕ арăмĕ.

... Тул çутăла пуçланă. Йунтапа йенђен шурăмпуç çути хĕрлĕ шупканăн йарăмланса килни палăрат.

Урампа иртекен çунасем сивĕпе нăтăртатса пыни пӳртех кĕвĕленсе илтĕнет. Раман тăрса пăхрĕ. Урампа йăраланса хуланалла шăвăнакан тийевлĕ лавсем ăна темшĕн куљантарђĕç.

— Ав тир лавĕсем!—тĕллесе кăтартрĕ арăмне.

— Хулана кайаç пуљ...

— Хулана... Епĕ кĕçĕр кайса килнĕ савăта леçеç.

— Апла пире те путтинккăсем илсе килсе парĕçха, тет арăмĕ.

— Пире тыттармĕç çав... Епĕр атă, поттинккă, алса тулĕсене ав, ĕнерех ĕнтсе çунтарса сывлăша вĕçтерсе йатăмăр. Пире тĕлĕкре тумланни те çитĕ, тесе йĕрес пек салкуллăн каласа хуђĕ Раман.

— Тирне сĕвес тесе каларăм та çав сана-а-а!..—терĕ арăмĕ те...

---

# Вĕсен опосĕ

## I

Пӳртре никам та çукран пуљ ахăрнех—„вăхăтлăха хам хуçа-ха ку пӳртре“ тенĕ йевĕрлех урай варринђе каркаланса ĕмĕртсе выртнă хăйĕн çăвăрĕсене çепĕç шăмшаклă хăмăр кушак.

Хаљ-хаљ вăрман хыçне анса ларасла çакăнса тăракан хĕвел хăйĕн пайăркийĕсене кантăк витĕр хăлаçлантарса урайĕнђи кушака йулашки хут çупăрласшаt кармашаt.

Çĕркаç çутăлађђенех сăра-ерех сăрхăнав тумламĕсене çăтса, шӳсе ларнă сăрлă сĕтелĕн çиийĕнђе шăнасем карти-картипе сăрăлтатса хăналанаççĕ.

— Вара каларăм вĕт сана...çавăн ђухнех каларăм,— тесе мăкăртатнă май, алăкран килсе кĕђĕç Йакравпала арăмĕ.—Каларăм вĕт... раç кĕлтепе çех витсе хăварма йурать çавна. Тăпри те хăть пĕр шит хулăмĕш витĕнеймен вĕт.

— Вăхăтлăха çех терĕмĕрçке... пĕрех Шетмĕри хунђăкам патне леçмелле вĕт ăна... Хамăр патăрта усрама йураманнине пĕлетĕн,—тесе ӳкĕнђĕклĕн каласа хуђĕ Йакрав тенкел çинђе пĕççине çапса куљанакан арăмне.

— Ăçтан кĕнĕ-ха... ăçтан кĕрсе кайна..ă..ă...

— Шăтăкран кĕнĕ ĕнтĕ, ăçтан кĕтĕр тата. Ав пахђа тĕкмине йăвантарса кĕрсе кайнă пулнă.

— Сысна вĕт-ха... Сысна та çавăн йевĕр мăшкăл тума пĕлет мĕн етеме.

— Сысни кăна вăл—ђорт çним!.. ађи те килнĕ вĕт-ха ун хыçĕнђен...

— Ађи кăтартĕ-ха та вăл пире пĕр мыскара. Тетĕшне каласа парсан тем ырринех курас çук, пĕтĕм йала пăлхатса пурнаканскер.

— Ан кала терĕм те-ха.. Спас кунĕ панулми паратăп терĕм.

— Каламăп терĕ-и вара?

— Вара, вара... каламăп терĕ çав...

II

— Ну, Пракахви пуçана...

— Прах ес çав сăмахна... што са песопраçи?! Сана пĕркунах тĕплĕн каласа панă вĕт, пуçана тесе каламалла мар—и, пастă...

— Ну, латнă ĕнтĕ, кунта никамах та çук. Стравствăй, Прокоппи Урлурайĕв,—тесе ђаплашкари пыллă сăрана ланкăртаттарђĕ Йакрав.—Ађа пирĕн ĕç нимĕнле мар, темĕнле пулса ан тăтăр-ха...

— Мĕн пуласси пур унта,—тет Урлурайĕвĕ ђерниллпа вараланнă пӳрнеллĕ аллисене ђаплашка йенелле хăлаçлантарса.

— Ађа новĕç пулђĕ-ха пирĕн.

— Вара... вара... Мĕнле новĕç?..

Йакрав Урлурайĕв пуçанăшнə хăйĕн „новĕçĕ" çинҫен лайăх ăнлантарса паҫĕ. Пахҫари икçĕр пăт ырашлă шăтăка никамран ыйтмасăрах кĕрсе ҫакаласа кўпĕниҫҫен çинĕ сысна комсомолĕс Çинахвисен пулнă тенине илтсессĕн, сасартăк ҫĕтренсе кайнă аллинҫи ҫаплашки ҫут çех урайне персе анмарĕ Урлурайĕвăн.—Вара мĕнма ҫиксе пăрахмарăр сыснине?!..

— Аҫи çитсе ĕлкĕрҫĕ... аҫи.

— Çинахвийĕ-и?!

— Çук... кĕçĕнни.

Йакравăн пўрҫĕ кĕçĕр иртнĕ каçсенҫи пек хаваслăх шавĕпе кĕрлесех хавхаланаймарĕ. Сăрлă сĕтелĕн çийĕ те ўсĕр алăсем тăккаланă сăра-ерех лўшкепҫĕкне кĕçĕр тăрапаҫҫенех çăтаймарĕ. „Аллăмра пĕр алтăр пыллă сăра...

Хуйхă çухалтăр—

Тав пурсăра!.."—тейекен кăшкăравлă такмакне те калама асне илеймерĕ пулас кĕçĕр Урлурайĕв. „Тăван сиртен ытла çыннăм та çук" тесе те йурлаймарĕ хăт Йакравăн йăпăлтавçă арăмĕ те...

Пурте „ĕçе"... Пурте хыпалануллăн пўртрен шăвăнса тухса сĕтел çинҫи карăнса ларакан сăра-ерех пасутисене тăлăха тăратса хăварҫĕç.

Пўрт хуçийĕ--кушак, тата унăн çăвăрĕсем. Каллех пўртри „инструмĕнтсене" вĕсен аллине шанса хăвармалла пулҫĕ. Аçта кайрĕçши, ăçта...а...а... тесех ҫăнкăртатса илнĕ сăра витрин хăлăпĕ. Ăçта...а...а... тенĕ кĕç-кĕç пушанма авăрланса ларакан ерех кĕленҫисем. Ăçта ҫăрсăрланса кайрĕçши-и...и...и тесех нăйкăшуллăн сăрăлтатса илнĕ шăнасем те.

Виçĕ мĕлке кил хапхиниҫен тухса, виççĕш виçĕ йенелле кайса çухалҫĕç. Ăçта кайрĕç вĕсем?.. мĕскер шырама?!. Çук... никам та пĕлмест. Никамах та вĕсене кураймарĕ. Çутă уйăх та хăт пулмарĕ ăçта кайнине куçласа йулма.

III

— Ну, тăвансем... пулҫĕ ĕнтĕ халҫ. Уттарăпăр йерипенĕн,—терĕ те Йакрав ҫĕтревлĕн, сухалне йапшаррăн шăлса илҫĕ.—Хам малтан кайăп.

Тийевлĕ лавсем вĕçрен-вĕçе хатĕрленсе тāђĕç. Çавăнтах Урлурайĕвăп хĕрађи те хашкаса çитрĕ... аллипђе хăмађă йалав.

— Ку мĕн тума?—ыйтаť Йакрав.

— Кăна атте парса йађĕ, малти лавĕ çине çакђăр терĕ...

—А-а-а, хĕрлĕ опос тăвасшăн...хĕп хĕрли,—пăшăлтатса илђĕç лавçăсем.

— Аван, аван...—терĕ Йакрав та.

Лавсем вырăнтан хускалђĕç. Тийевлĕ 8 лав... пахђари сысна пуçланă шàтăкри икçĕр пăт ыраша тийенĕ вĕсем,—Шетмĕри хунђăкăш патне кайаççĕ.

... Камсемши вĕсем?.. Лавçисем камсемши...Çук... Вĕсемшĕн хăрамастпăр. Хамăр çынсем. Вăртах, хăйматлăх, хунђăкам, т. ыт. те. Пĕр Пракахви пуçани çех пĕрле пыраймарĕ. Ну ĕнтĕ ун хăйĕн ĕçĕ те мăй таран. Ирех кăнтселерине каймалла. Ăна ту...кăна...Йе пĕр-пĕр вăртахĕ ăнсăртран мухмăр ђĕртмешкĕн çавăтса кайĕ. Пуçлăх вĕт вăл. Йалканашĕн пуçлăхĕ. Çавăнпа та ăна Йакрав йевĕр „пуçанасем“ кăмăллăн авăнса, йăлăнуллăн пуç тайма тĕрĕс тивĕçлĕ. Вара кăмăлĕсене кура вĕсене тĕрлĕ „инкек-синкексенђен“ хăтармашкăн Пракахви Урлурайĕв хатĕр йаланах.

Тийевлĕ лавсем йал хапхи патне ытлаванах пырса çапăннăђђĕ... анђах темшĕн сарăмсăр ђарăнмалла пулђĕ малти лавăн.

— Мĕскершĕнха есĕр... Камсем... мĕнма пире ђараттăр?..

— Камсем çавха есĕр... ăçта кайаттăр çапла кĕшĕлтетсе?..

Умра тăракан комсомолĕссемпе колхоçнĕксене курсан, Йакравăн çанçурăмĕ сивлеклĕн çӳçенсе илђĕ. Куштăркаса пĕркеленнĕ хупăлђаллă çăварĕнђен сăмахĕсем ђĕтревлĕн пĕтĕрĕнсе туха пуçларĕç.

— Хĕрлĕ опос вĕт ку пирĕн. Кăнтăрла кайма ытла шăрăхран çавăнпа çĕрле уттарас терĕмĕр.

— Çук, Йакрав Никкапăрыђ... кăнтăрлах кайăпăр. Ак ыран ир, халăхпа пĕрле... а, халĕ айтăр—лерелле уттарăпăр.

— Тархасшăн ес, Çинахви, ӳкĕте кĕр халĕ. Сана нимĕн те туманçке епĕ хилиђђен... сыснуна та тивмерĕм... тепри пулсан...

— ?!..

---

— Йакрав темшĕн хуйхăрат. Куђанмаллих те мар пек ĕнтĕ халђ санăн,--тет пĕр колхоçнĕк.--Халђ ырашна сысна кĕрсе ђăмлассинђен иниклеимелле мар... ак вырăнаçтартăмăр тирпейлĕн мĕн пысăккĕш аслă ампара.

— Вăл çапли çапла-а-а... Пракахви пуçанана тĕл пуласђĕ-ха.

— Ана илсе кайнă. „Хĕрлĕ опос“... Сирĕн опосăр пирки топрос тăваççĕ.

Топроса камсем тăвассине Йакрав каламасан та пĕлет. Паллах, хунђăкамсем, вăртахсем „пуçанаран“ топрос тумаççĕ. Çавăнпа та Йакрав нимĕн шухăшламасăрах тарласа сăранланнă кăшăллă картусне калăп манерлĕ пуклак сăмси çине пусăрăнтарса лартса, килнелле вăркăнтарђĕ.

... Тул çутăласси инçех йулман. Йал хушши лăпкă. кĕрлевсĕр. Ампар умĕнђе пухăнса тăракан комсомолĕссемпе колхоçнĕксенђен çех çакăн пек калаçăвлă сăмахсем илтме пулат:

— Çавăн патĕнђе мехмĕрленнĕ иккен вăл йалан...

— Вара унсăрăн Урлурайĕвăн ĕçме ăçтан укçи çиттĕр. Кашни кун ӳсĕр вĕт... пĕркунне районтан килни те актă çырса кайнă терĕçха ун çинђен.

— Вăттăк камсем ĕçлеç пирĕн аппаратра. Çавăнпа пирĕн кирекмĕнле каммпани те сăлтавсăр ђăрмавсемпе çыхлапăнса ĕселенет мĕн...

— Лавçисем камсемха... Лавçисе-ем?..

— Çитет ĕнтĕ, ан пакăлтатăр.

— Ку ĕç мĕнле сăлтавран тухса, ăçта çитсе перĕннине ыранхи аслă пухура тĕплăн каласа пĕлтерĕпĕр.

# Ыран йупилей тенӗ ҫух...

Ыран колхосӑн йупилейӗ. Ҫывраймарӗ ку каҫ Асот. Ҫывӑркаларӗ пулсассӑн та, ӗретлӗ ӑнӑҫлӑ ыйхӑпах ҫывраймарӗ.

Ак ун умӗнҫе упӑп ӗлӗкхи тарҫисем. Ун патӗнҫе 12 ҫул кӗтӳ кӗтсе пурӑннӑ Макҫӑм темӗнле йантӑравлӑн кӑшкӑрать. Ун хыҫӗнҫен ыттисем те.

**Пӗри** (хулӑм саспа): Пайан..
Пайан...

**Ыттисем** (йурласа): Колхос орканисатсиленнӗ
Колхоҫнӗксем, хӗпӗртӗр.
Ҫухӑнсемпе патраксене ирӗк панӑ.
Вӗсен вӑйне пӗрлештерсе ҫӑмӑртанӑ-ӑ-ӑ...

Аташать Асот... Мекеҫленет. Акӑ вӑл хӑйӗн ӗлӗкхи шыв арманӗн кавӑс тӗпӗнҫе танкӑлтатса ҫӳрет. Ҫавӑнтах ӑна пӗр йӗкехӳре ҫанӑран тармакласа тытса: Асотте, айта хӑнана, тесе сӗтӗрет пек. Лешсем ҫаплах кӑшкӑраҫҫӗ...

**Пӗри** Ҫухӑнсемпе патраксем
Итлесе тӑрӑ-ӑ-ӑр!..

**Ыттисем**: Килӗр кунта пирӗнпе—
Ҫӗнӗ йурӑ кӗвӗлер...
Ӗлӗк пирӗн тарпа пуйнисенне
Хӑварар мар тӗввине.
Пирӗн ҫул суйа ҫул мар—
Сотсиалисӑм ҫулӗ.

Ҫавӑнтах Асота пырши пакартисем тӑрлама пуҫларӗҫ.

— Мӗнма есӗ пире ӗлӗкхи пек тутлӑ куҫҫенеҫсем ҫитерместӗн,—тесе хирӗлет пӗр пысӑк пырши.

— Мӗнма есӗ пире аҫашласа усрами пултӑн,—ҫуйӑхаҫ вӗтӗ пыршисем...

Лешсем хӑйсен йурринех сӗлтеҫҫӗ.

**Пӗри**: Колхос
Орканисаттӑрӗ...

**Ыттисем**: Кулак ҫӗҫҫи айӗнҫе вилнӗ
Петӗр йулташ,
**Халӗ** пирӗнпе пулинҫӗ...

Епĕ пуҫласа йанă ĕҫ
Харама каймарĕ
Иккен тесе,
Хамăр вăйпа тунă ҫăкăр-тăвара
Пирĕнпе пĕрлех апатланса,
Сăрлă сĕтел хушшинҗе
Савăнса ларинҗҗĕ...

Ҫĕрĕ те вăрăм. Кĕрхи ҫĕр. Ăҫта кăна ҫитсе перĕнмерĕ пуљ Асот. Анҗах хăт ăҫта та канлĕх ҫук... Ырлăх кустăрмин шăлĕсем шалтăртатса кайнă. Кӳпҗекĕсем хавшанă. Ҫак кустăрмана тытса тăрат Макҫăм. Ремонт тăвас кăна—тәрĕҫ ыттисем. Ертел алли хăпăлхапăл ҫĕклесе кайрĕ кустăрмана. 5 минут та иртмерĕ пуљ, хай ырлăх кустăрмийĕ ҫинҗе трактăр пашлатса килет. Макҫăм шоффĕр...

-- Пăрăн пирĕн ҫул ҫинҗен, Асот!—Пăрăнмасан таптатпăр!..

Асот пăрăнма тесе хăтланнăҗҗĕ, анҗах шăмшак сĕткенĕ типсе ҫитнипе пăрăнса ĕлкĕреймерĕ. Трактăр ҫаплах Асот ҫурăмĕ ҫине кĕмсĕртетсе кĕрсе кайрĕ...

Җылай анкăминкĕленсе пĕтнĕ хыҫҫăн, тула тухас килнипе Асот ыйхăран вăраннă. Унăн тĕлĕкри куҫҫулĕпе тăртаннă куҫĕсем крахмал пек хытса ларнă.

-- Мĕскер амакĕ мана ҫав тери ҫĕмĕрсе пĕтернĕ?..

-- Мĕскерха, мĕскер манăн хăлхана йĕрĕптернĕ кĕҫĕр?—аранах тавҫăрса илҗĕ Асот.

Тĕлĕкре аташнă иккен. Хăрушă...

... Җăнахах вĕсен йурри. Ох, җăнахах... тĕлĕкре пулсассăн та...

Җылайҗҗен тĕлĕрсе ларнă Асот хытнă сăхман ҫинҗе.

— „Епĕрех пĕтернĕ Петĕре“ тенĕ вăл.

Епĕрех... пуҫанапа... Унпах пĕтмен вĕсен йышĕ... Пĕтмен...

Кăткă... кăткă пек ĕрҗевлĕ йыш... Ăҫта пирĕн!?.. Ҫук пирĕн йыш... Вăрăмтуна ĕмри пулҗи мĕн пирĕн ĕмĕр. Ҫук... Пĕтнĕ... Пирĕн ҫул ҫĕленҫип җухлĕ те йулман!..

Çак сăмахĕсем пĕтне хыççăнах,
Асот ђĕри ўпки çине утланђĕ.
— Вĕсене текех тытаймăн ывăçпах,—
Терĕ те, кăвак тути шапах хупланђĕ.

---

# Вăл кайрĕ

Çемйипех аташса, çитмĕл те çиђĕ çеçенхир урлă, çитмĕл те çиђĕ вăрман тăррисен урлă танкăлтатса çўренĕ вĕсем вăл каç. Пуринђен ытла Иванăн амăшĕ тĕрлĕрен те тĕрлĕ, тарăн та хăрушă çырмасем урлă каçа-каçа ĕнтĕркесе суптăркана. Нихăçан упасем пырса кĕмен çырмасен урлă та каçнă вăл. Çавăнпа ывăннă та. Çавăнпа сывăрнă вырăнĕ çинђен пуçне хăпартсанах пĕр кашăк сĕлеки тутисене уçса тухса урайне тăкăнђĕ.

Ирхи хĕвел кантăкран кармашса кĕрсе, хăйĕн вăрăм пайăркипе Иван арăмĕн тăлпаланнă çўçне мĕштĕртеттерсе илђĕ.

— Тăрха, Мирун,—терĕ вăл ыйхăллă çăварнэ ирĕксĕррĕн карса.

— Те ырлăха, те хурлăха...

— Мĕн амакĕ?...

— Пĕтепĕр пуљ карђăк. Йулатпăр навернă Иванран.

— Кайатˇ пуљ çав, кайаˇ пу-у-у-љ-љ...

Пĕр самантлăха пўрт шăпланђĕ.

— Ех, ађам, ађам...—терĕ Мирун хăйĕн пўлĕмĕнђен вăранса тухакан Ивана курсан.

— Кайатăнах пулĕ, кайатăн... Лаша та ĕрĕхсех тухса кайрĕ хапхаран тĕлĕкре.

— Пирĕн лаша ĕрĕхеймест вĕт,—ырхан...

— Çапла та, ађам, çапла пуљ... Таçта пек, ниçта та мар пек... Капан та мар пек,—сĕкĕрт те мар. Çавсен хушшинђе епĕ çўретĕп пек.

—Йулашки хут питне çутарам,—тесе ĕсĕклесе шыв йарса тăратˇ амăшĕ Иванĕ питне çунă ђухне.

— Ей, ађа-а-а-м!—тет Мирун.

— Тăратса хăваратнам ĕнтĕ тăлăха-а-а...

— Муш каймăпха,—тесе шантарса ĕнентерет Иванĕ.

Унтан вара çимĕ ларҫĕç. Ăсату йашки...—Йулашки йашкари йулашки улмисемпе салмисем йулашки хутт Иванăн çăварĕнҫе кавлемеççĕ,—шухăшласа пăхса тăрат ивана амăшĕ.

Мирун лашине кӳлсе пĕтерҫĕ—алли ҫĕтĕрет,—ҫĕтĕрет пулин те. Карташĕнҫе „айхай ман çамрăк пуç телейсĕр", тесе сысна çăвăрĕсем ырхан амăшĕ хыçĕнҫен нăриклетсе ҫупса çӳренĕ.

Урамра йытăсем „хам"-латтарса хыттăн вĕрни илтĕнет. Хĕвел ҫылай çӳле хăпарнă. Мирунăн çĕтĕк айтурне кӳлĕннĕ ула кĕсри хулана май лĕпĕстетрĕ. Хапхаран тухнă ҫухне Иван,—„кайатăп вĕт тăван,—ай йулатăр, епĕ кайсан кама ай йуратăр", тесе йурă пуçлама асне илнĕҫҫĕ, анҫах урампа Çтаппана комсомолĕсем хĕрлĕ йалавсемпе „марш" кĕвви йурласа ăсатнине курсан, Иванăн „кайатăп"-па пуçланакан йурри срасу пырне ларҫĕ.

*
* *

— Айта, атте,—кайрăмăр...

Мирун çавăнтах ват лаша пек тулхăрса, Иван хулпуççийĕнҫен уртăнса кăшкăравлăн макăрса йĕрсе йаҫĕ,—камсемпе кайрă-ă-ă-р-р-р...

— Иксĕмĕр... Айта киле кайатпăр, киле...

— Киле?!..—Йĕпе-сапара кахаллăн пăхакан хĕвел пек куççулĕ витĕр кулса илҫĕ Мирун.

— Каймарăн-и мĕн салтака?

— Не котĕн...

— Ниçта йурăхсăр, снаҫҫăт... Аван... Çтаппан мĕнле тата?..

— Вăл кайрĕ...

— Вăл кайрĕ!?. Ах, шеремет аҫи... Йртнĕ çулсенҫе санран ҫылай имшерҫҫĕ-çке вăл.

— Имшерĕ хаҫ тӳрленнĕ çав. Вĕсем столовăйра апатланаççĕ. Вĕсем колхосра...

Çавăнтах присывнĕксен çурҫĕ умĕнҫе кăшкăрса тăракан кромкоковориттĕл питлĕхĕ çине пăхса илҫĕ Мирун.

— „Хĕрлĕ ҫар вăл,—пирĕн шкул“—кăшкăрат питлĕх.—Хĕрлĕ ҫара ĕлĕкхи пек хурланса, куҫҫулĕпе ăухенсе мар,—ђĕрери шанђăклă ĕмĕтпе хĕпĕртесе ăсăнар“...

Ҫав сăмахсене лайăх тавҫăрса илђĕ Мирун. Тинкерсех итлерĕ Иван та.

Ак ђăвашлах, ђăвашлах вĕт калаҫат:

„Пире хĕрӳ пурнăҫ
Ђĕнет кĕрешме,
Ђĕнет ҫĕнетме кив йала...
Ђĕнет алла-аллăн
Ĕҫре пĕрлешме
Алăри ђаплă хăмаđă йалав.
Ей, ватă сухал,
Мĕнтен тĕлĕнетĕн,—
Йе кивĕ суха
Кунне хĕрхенетĕн?“...

Йулашки сăмахĕсем Мирунăн хăлхинђен йури шаккаса калană пекех туйăнђĕ.

— Но, айта!.. Килелле ула кĕсри лĕпĕстетрĕ. Ҫĕтĕк айтур ђĕриклетсе ђĕтĕресе пыnă май, Мирунпа Иван хушшинђе пайанах ĕмĕтлĕ шанђăкпа пурнăҫланмалли сăмах кунђаланса пырат.

— Кĕрес пулат, атте, ҫырăнасах пулат.

Мирун Иванăн сăмахĕсене хирĕҫ мар.

— Ђăнахах та, пурпĕрех йалĕпех кĕмелле. Мĕнеха тата кĕтетпĕр. Веҫех, веҫех капла пурăнса калуйа тухса кайатпăр. Ав—Ҫтаппан. Котĕн пулмасăр,—мĕнха пултăр. Тăранттаспа ҫех тăрăлтаттарса пырат. Кӳлĕннĕ лаши те, хай как калас—ҫăмарта вĕт.

Ҫавăнтах Мирун хăйĕн айри айтурĕ ҫине куҫĕсене сиввĕн тĕллеттерђĕ.

—Айтурăмăр та, кĕсремĕр те, сыснамăр та, хамăр та, салмамăр та, улмамăр та,—пурте, пурте, хай как калас—пурăнма та намăс еппин...

* * *

Халĕ Мирун ҫемйи колхосра.

**Мирун колхос анкартинђи сĕкĕртсен хушшинђе тĕлĕкре мар халђ—ђăн-ђăнах савăнса утса ҫӳрет.**

„Айхай ман çамрăк пуç телейсĕр“ тесе йĕрекен сысна çăвăрĕсем—„Хуçан ăсĕ пулсан хай вилмĕпĕр“ тесе текламатсилесе çӳреççĕ таса та, çутă пысăк витере. Вĕсен умĕнђе мĕн çийес тенĕ вăл пур. Хай как калас, „улпут ывăлĕсем“ пек.

Çапла майлашăнса кайрĕ пурнăç Мирунăн. Вĕсен колхосĕнђе, иртнĕ аслă пуххинђе епĕ те пултăн. Вăл пухура Мирунпа Иван иккĕшĕ те хăйсене хăйсем, авăн çапса пĕтерес ĕçре хастарлăн ĕçлеме ударнĕке йевитлерĕç.

---

## Татăлнă ĕмĕт

Шурăмпуç пĕлĕте сенкерĕн хыпсанах Ерхип вырăнĕ çине тăрса ларса анасланă.

Ӡнăн хăвăл пуçне витсе тăракан çӳçĕ, кăвакара пуçланăскер, çĕр каçађђен йăраланса клевĕр ути пек арпашăнса ђăлханса кайнă.

Питне-куçне çуса шăлăнсанах, çăматтине тăхăнса йађĕ те, арăмĕн турашĕл тăвакан кĕрепенкине илсе çӳçне тураса йакатрĕ.

—- Ну, тавай хатĕрлен. Ађасем вăранађђен ĕçе пĕтерес пулат...

Ерхип мĕн çинђен каланине арăмĕ çавăнтах тавçăрса илђĕ. Ма тесен пулас ĕç çинђен вĕсем ĕнерех килĕшсе каварланнă.

— Вăл халех кĕнтселерне пырайман та пулĕ. Вăхăт ир-çке-ха...

— Унта пырайман пулсассăн, килне кай—хăй патне.

Арăмĕ претçетаттĕле илме тухса кайсанах, Ерхип çĕççине илсе, ĕне карти йенелле сулăнђĕ

— Паллах, ђирленĕ... Сывă ĕне çапла кавлесе тăмаст ĕнтĕ вăл,—хăй ђунĕнђен хăй кулат Ерхип.

Ĕне ăна хирĕç пăхса хурлăхлăн ĕнĕрлесе илђĕ. Сисет вăл. Ђавса тăрşшĕ йалкăшса тăракан çĕçĕ ырăшăн мар хуçа аллине хăйранăнса тытăннă. Йулаш-

ки сехет, йулашки минут вăл суттĕнҫешĕн ĕнĕрлет. Йулашки кавлемсем унăн ҫăварĕнҫе кавленеҫҫĕ.

Ҫавăнпа та ĕне, йешĕл унăн калаҫма пĕлекен ҫĕлхи пулсассăн, мĕн-мĕн кăна каласа хăварнă пулĕҫҫĕ вăл пайан кун хăйĕн ҫамрăк ĕмĕтлĕ ҫунне татакап хуҫике.

Паллах, вăл ҫакна калаťҫĕ:—Ерхип, савнă хуҫа!.. Есĕ пайан ман ĕмĕтлĕ ĕмĕре татнăшăн хурланмастăп. Шалккă мар маншăн хамăн хырăмри тата икĕ уйăхран сутҫанталăка тухакан пăрăвăм та. Анҫах шалккă, есĕ ху пурнакан пурнăҫна ăнланса илейменни. Калахэ, есĕ ăҫта, тата мĕскершĕн пурнатăн?.. Ҫакă хытă, сивĕ картара халтăраса ҫуралса, ҫакăн ҫухлĕ тăлпĕвĕме ҫитĕнтертĕм. Тӳрех калас пулаť. Ырă кун, ырă каҫ сахал курнă епĕ ĕмĕрĕмре. Малашнехи тивлетлĕ кунҫулăм тивлетлĕн курăнса, куҫăмсене савнăҫлăн илĕртетҫĕ.

Анҫах вăл ĕмĕтлĕ шанҫăк сӳнет пайантан. Манăн тăвансем, манăн тантăшсем, такҫанах вĕт таса та, сутă, ăшă витере хавасланса пурнаҫҫĕ. Вĕсен хуҫисем камсем, тата ăҫта вĕсем?!.. Паллах, колхосра...

... Ну сывă пул! Епĕ ҫуккишĕн кайран тунсăхласа макăрнă ан пул... тесе Ерхипе хурлăхлăн, куҫҫулĕ витĕр алă панă пулсассăн, Ерхипĕн кăмăлĕ ҫемҫелсе ĕнене хĕрхеннĕ те пулĕҫҫĕ-и тен... Анҫах калаҫма пĕлменни... Калаҫма пĕлменни ҫылайĕшĕн пуҫĕсене ĕмĕрлĕхе ҫухатаť ҫав.

Ав Ерхип аллинҫе йалкăшса тăракан ҫĕҫĕ те хĕрлĕ ĕнен ҫирĕп мăйне ватăрласа кĕрсе кайрĕ. Ĕне мăнтарăн ҫĕнеймерĕ те вĕт,—мак! анҫах турĕ темĕнле ҫĕлхипе.

Ĕне вилеймен. Ĕне йулашки тухса пĕтеймен вăйне хурса тапаланаť. Ҫав вăхăтрах Ерхип арăмĕпе претҫетаттĕл хапхаран килсе кĕреҫҫĕ.

— Ну, мĕнле?.. Пусрăн ĕнепе.

— Пусмасан вилет. Ҫавăнпа сана комиҫҫи пăхтарас терĕмĕр. Аша ахаллĕн сайа йарасси вĕт.

... Ҫим-ха, ҫим...—Ерхипĕн сăмахĕсем ҫĕтĕревлĕн кунҫаланаҫҫĕ. Вăл пӳрте ҫупса кĕрсе кайрĕ.

— Мĕн мурла хыпнăха вăл паранкине,—тет тĕлĕнсе претçетаттĕл.

— Аҫасене шанса пулҫĕ вăл ĕç,—тет йĕрем пекки пулса Ерхип арăмĕ,—паранкине вĕт каласа тăнă çĕртренех турамасăр панă.

— Та... пысăк инкек. Йеплеха пурнăр ĕнесĕр. Аҫасене хĕнтерех пулаť.

— Вара пусман пулсассăн та пурпĕрех илсе кайаҫҫĕç пулĕ совета?—ҫăннипех макăрса йаҫĕ арăм.

Претçетаттĕл унăн шанҫăксăр сăмахĕсем тăрăх ĕненми пулса ĕне карланкине хыпалама пикенҫĕ.

— Ăçта кунта ҫăмăр паранкă?!..

— Кунта, кунта сҫас!..—тет Ерхипĕ пÿртĕнҫен ҫупса тухса. Пысăк ҫăмăр паранкă аллине тытнă вăл.— Епĕ кăна çăварĕнҫен кÿтĕркелесе ҫикеспĕнҫҫĕ. Есĕр ҫас килнипе..е..е...—сăмахĕ пырне ларҫĕ Ерхипĕн.

— Ех, ты... Ерхип Хăвăлпуçăвиҫ!.. Мĕскер-ха хăтланатăн? Ху пурнăçна ху тăшман вĕт есĕ... Саншăн кам йĕмелле!?.. Е... е?!.

— Шайман карҫăкĕ каланипе...

— Мĕн каланипе?...

— Вара йала пĕр ĕне те хăвармаççĕ тет. Йăлтах совета çавăтса кайаççĕ тет. Çавăппа ашне те пулин çисе йуласшăн...

— Сирĕнне илмеççĕ. Ирĕккĕн парсан çеç. Ҫухăн вĕт есĕ. Пĕлес пулаť малтан. Хăвăн мулна ху хуçа пулас пулаť,—тесе сурса тухса кайрĕ претçетаттĕл.

— Ҫăнласах та!..—тĕлĕнсе пăхса йулҫĕ Ерхип.— Пусман пулсассăн. Икĕ уйăхран пăруласа панă пулсан... Килес çул пăрушне ирĕккĕн патшалăха панă пулсассăн. Шайман карҫăкĕн суйа елекĕ хыççăн сиккипе ҫуптарса кайман пулсассăн, хĕрлĕ ĕнем, йулашки шанҫăклă мулăм, пайан кун ман çĕçĕ мăшкăлĕ пулса çакăнта тăсăлса выртман та пулĕҫҫĕ-ĕ-ĕ,—тесе аҫа пек макăрнă май, ĕни çине йăвансах ĕсĕклерĕ Ерхип.

Лупас айĕнҫе утса çÿрекен сар автан та „тет" хыççăн кайса татăлнă ĕмĕтлĕ Ерхип йĕнине хурлăхлăн карăнса пăхса тăнă.

# Кĕрсе кайнă

Ĕнтĕ мĕн каласас та, мĕн сăмахлас Самсун утарнĕкĕмĕр çинђен. Вăл ђăн утарнĕк. Ăна тунмастпăр. Вăл хăй утарнĕк иккенне иртнĕ çураки умĕнђи аслă пухурах вăл йевитленĕ. Колхоçнĕксем вара ăна уншàн ђылайђђен алă çупса, урра! кăшкăрса хĕпĕртеттернĕ.

Самсун савăннă. Савăннипе килне çитсен çав каç арăмне: Ей, ђăн ĕмĕртен пире ӳпкерен те, пĕвертен пăхăнса пурăнакан вăрăм çӳçлĕ, мĕлкерен хăракан хĕрарăм... Савнă мăшăрăм Мавра, пăхса ил-ха ман тавра... Сан упăшку камне асту!.. Утарнĕк вĕт епĕ. Утарнĕк... Епĕ, епĕ... еп... кĕçĕр колхоçнĕксен аслă пуххинђе хам хастарлăхăма шанса хама-хам утарнĕке йевитлерĕм. Çавна аспа ил,—тенĕ.

— Нисна-а-ай,--тенĕ Мавра.--Ĕçле-ха малтан, ĕçле...

— А, çапах санăн та çырăнасах пулать утарнĕке. Унсăрăн ĕç тухăçлăхне хăпартма меслет çук. Ну, тепĕр йенђен йађĕ мĕне тăрат.

— Йађĕпе кăна мар-ха та, курăпăр...

*
* *

Самсун ыйхăран вăранса анасланă ђухне хĕвел хăйĕн пайăркийĕсене лупас урлах кармашăнса сапалама ĕлкĕрнĕ.

— Ăçта есĕ?—тенĕ Самсун хăйĕн çумне хыпаласа.— Так што есĕ халиђђен çывăрса выртатăн?!..

Мавра ђĕнмен. Ђĕнме мар, йăшăл та туман. Ма тесен, унта вăл çук пулнă. Çавăнпа ăна тем пек хыпаласан та аллине лектерейнмен Самсун утарнĕк.

Вара тарăхнă. Тăрса питне çукаланă. Тарăхсах тумланнă та, тарăхнипех уйа тухса утнă.

Тӳпере тăрисем йурланă. Вĕсем,—тăрри-тăрри, триллилик!.. триллилик!.--тесе йурлани Самсунах,—„утарник, утарник,—ĕçрен йулнă утарник,“ тенĕ йевĕрлех мăшкăлавлăн кĕвĕленсе илтĕннĕ.

— Ĕлкĕрĕпĕрха, хађ епĕ ĕнер çех илнĕ вăл йата, тесе лăпланнă Самсун. Вара вăл тырă акакансем патне пырса ĕçе пуçăннă.

Йаланхи пекех ир пулнӑ та, каҫ пулнӑ. Анђах Самсун Маврана ирхине нихӑҫан та курайман. Каҫхине ҫумра Мавра. Ирхине тӑр, пӑх йӗри тавра... Ниҫтан та тупаймӑн. Елле, ӑҫта кӑна кайнӑ... Вӑт мӗнле, —тӗлӗнмелле. Вара уйа кайсан тин, Мавра ӗҫленине курсан тин Самсун ахӑлтатса кулса йанӑ.

— Камран кулатӑн?—тенӗ Мавра,—хӑвӑнтани?!..

* * *

Ҫапла каҫ пулнӑ та, ир пулнӑ. Урамри йӑмрасен ҫулҫисем сархайса тӑкӑна пуҫланине кура, илемлӗ ҫу кунӗсем йерипенӗн иртсе пырса сивӗ хайар хӗл ҫывхарнине куҫ кӗретӗнех пӗлме пулнӑ.

Кунта епӗр Самсунсен колхосӗ уйхир ӗҫне йур ҫӑваҭҭен пӗр шӑл тырӑ хӑварми утарлӑ йӗркесемпе тирпейлесе, пысӑк ампарсене тултарса хуни ҫинђе ђаранса тӑмӑпӑр. Вӑл каламасан та паллӑ. Ӑна Самсун та пӗлет, Мавра та.

Ҫапла пӗр ирхине,—ӑҫта кайнӑ тӑр Самсун, вӑл пире кирлех те мар,—анђах вӑл кӗнтселерипе иртсе пынӑ ђух ҫак пӗлтерӗве вуланӑ:

„Пайан каҫпа шкулта колхоҫнӗксен аслӑ пухӑвӗ пулат.

Кун йӗркинђе: 1) Колхоҫнӗксен ӗҫ кунӗсене хакласа, тупӑша татӑклӑн валеҫесси.

2) Утарнӗксене парнелесси...

Ыттисене Самсун вуласа тӑмарӗ. Тӳрех килнелле вӑркӑнтарђӗ.—Тӗнђе илемсӗрех те мар, йату ҫех утарнӗк пултӑр, тесе хӑйне хӑй мӑкӑртатса пынӑ вӑл.—Мӗнђул каларӑм Маврана... ак хаљ парнесӗр шӑхӑрса йул ӗнтӗ. Парне—утарнӗксене...

* * *

... Ҫапла, ҫапла,—тет претҫетаттӗл.—Кашнӑй ӗҫ кунӗшӗн саккӑршар килокрам тӗрлӗ тӗслӗ тырӑ хакланат. Анђах ҫавна астӑвӑр. Малтан аванс илнисем, ӗҫ вӑхӑтӗнђе столовӑйра апатланнисемшӗн кунта тыррӑн тытӑнса йулаҫҫӗ.

— Латнӑ. Ана пӗлетпӗр,— терӗ пӗри кӗтесрен.

— Айта ҫасрах тепӗр ыйтӑвӗ ҫинӗ куҫас,—тет Самсун васкавлӑн.

— Тепӗр ыйтӑвӗ вӑл—утарнӗксене парнелесси. Кунта малтанах Маврӑ Трутоҫупимӑвӑ ҫинҫен ҫарӑнса тӑрас пулать. Ӑна пур ӗҫре те хастарлӑ, арҫынсемпе пӗр тан,—ташӗ малтан ӗлкӗрсе пынӑшӑн правлени пӗр халатлӑх сакӑр меттӑр сукнапа парнелес терӗ. Христан Иванне пӗр пиншак, Марттин пиҫҫене пӗр мӑшӑр ҫӑматӑ, Мулли Таҫккипе Курак Вассине пӗрер тутӑрпа пӗрер саппунлӑх. Вот ҫаксем пирӗн уйхир утарнӗкӗсем. Вот ҫаксем колхос тивлеҫӗпе парне илмешкӗн тӗрӗс тивӗҫлӗ пулҫӗҫ.

— Мана мӗскер?—тет йӗрес пек Самсун.

— Вернӑ...Есӗ те утарнӗк вӗт,—тӗртрӗ пӗрн хыҫалтан шӑл йӗрсе.

— Паллах, утарнӗк. Мӗн есӗр?..

— Сана!..—терӗ претҫетаттӗл,—сана малтанхи ыйтупах каларӑмӑр-ҫке миҫе ӗҫ кунӗ ӗҫлесе илнине. 14 ӗҫ кунӗ санӑп. 7 пӑтлӑх. Ҫулла столовӑйра ҫинине тӳлесе татмашкӑн шӑпах.

— Мӑшкӑламастӑни есӗ?—тет Самсун.—Маврӑ утарнӗк те мар-ха вӑл. Ҫӗр хӗрӗх ӗҫ кунӗ ӗҫлесе илнипе мухтанать штолӗ.

... Нумай ҫаркашса тӑма памарӗҫ Самсуна. Ӑнлантарҫӗҫ. Самсун ӑнланҫӗ. Утарнӗк тенӗ йата хӑвна ху йевитлепи анҫах мар, ӑна укҫа парсан та илме ҫук иккенне Самсун тавҫӑрса илҫӗ.

---

# Йуман патӗнҫе

Йал панҫехҫҫӗ вӑл йуман—
Асаннесен „киремеҫӗ"...
Мӗн ҫул нухрат пӑрахман,
Йе мӗн ҫухлӗ пӳремеҫӗ
Ун кутне пырса хуман...

— Тыр вырма кайнӑ пулҫ-ха вӗсем, йе ыраш ҫапаҫҫӗ пулҫ?.

— Ҫук,—тет Ваҫкка.—Тухтӑрсем ҫапнӑ ҫухне те, вырнӑ вӑхӑтра та пулҫнитсӑрах ӗҫлеҫҫӗ. Кай пайан, кайах... Унта ҫасах тӳрлетсе йарӗҫ.

— Каймаллах пулат пуљ çав. Унсăрăн хытăран хытă ыратма пикенђĕ.

* * *

... Ваңккан асламăшĕ çиђђĕмĕш кун ĕнтĕ пӳрне шыççипе асапланат. Çиђĕ кун та, çиђĕ каç вăл ун пирки канăçлăн çывăрса кураймарĕ.

— Мĕн тумалла. Ийутине те ĕнтĕ сĕрсе пăхрĕç, çапах та ыратма ђарăнмаст,—тет.

Ђăнласах та унăн пӳрнине ĕнер колхосри ĕç патĕнђен ĕç патне куçса çӳрекен аптеккăран „йотă“ йатлă ђĕпĕтекен емел сĕрсе йанă пулнă. Анђах çав тери хивреленсе шыçнă вăта пӳрнене ку емел ыратма ђарăнтарайман.

... Ваңкка ыраш çапнă çĕре хыпаланса тухса кайсан, пӳрте пĕђђенех тăрса йулнă асанешне ирĕк пулђĕ.

... Те кайас пуљнитсăна, те пĕреххутђен кайас та мар. Пуљнитсă йĕрки мар-ха та ку шыçă, ăна пĕлетĕп... вăл вилĕрен. Мĕскĕн ватăлса çитнĕ çылăхсăр пӳрнем вилесем тытнăран асапланнине çĕркаç тĕлленнĕ тĕлĕк те уççăн каласа парат.

—Йе-.. терĕ асанне.—Йе хаййуман тытса асаплантарат пулĕ. Виçĕ çултанпа вĕт еп унта виçĕ пуслăх йапала та кайса хывман. Ех, çав. Ваңккках çав мана... Ваңкка ђарса тăрат. Пуљнитсă ĕçĕи вара ку?!. Çу-ук!

Асаннен пуçне тахçанхи темĕскерле шухăшсем те сарăмсăррăн кĕрсе кайса, ылханлăн пăтрата пуçларĕç.

Виçĕ çул ĕлĕк çав йуман патне Круçка арăмĕпе пĕрле тĕрлĕ ĕçме-çимесем кайса пăрахнине асне илђĕ вăл. Йуман тĕлне пĕлет. Вăл тăват çухрăмри Йунтапа йалĕн укăлђи хыçĕнђех. Ун ђухне вĕсем çав йуман патне çиђĕ пӳремеђĕ, çиђĕ нухрат, çиђĕ капăртма, тата çав ĕçме-çимĕçсемпе йуман патĕнђи „пирĕштисене“ хăналантарма пăри çăнăх ђустинђен пĕр çын кĕлетки туса кайса лартнăђђĕ.

Темĕнле ђиртен сывалас тесе йуманран йăлăну тилмĕрме кайнă вара вĕсем ун ђухне,—асанне ăна астумаст, маннă. Сиплĕхĕ пулнă-и, пулман-и вара вăл йуманран. Ăна та асанне халь тĕплĕн каласа пама пул-

тараймаст. Анҫах ҫакна лайӑх астӑват вӑл. Вӗсем ӗҫме-ҫимӗҫсене йӑтӑрланса йӑтса пынӑ ҫух йуман тӑрринҫе куккук авӑтса ларнӑ пулнӑ. Круҫка арӑмӗ ҫавӑ куккука—ку ҫӑн телейлӗ тӳпери архаккӗлсемпе акатуй йарса вӗҫсе ҫӳрекен таса та, ҫылӑхсӑр пирӗшти. Ҫӗр ҫине анма тур ҫырман ӑна,—тенӗ.

— Калаха куккук!.. тата миҫе ҫул епӗ ҫак ҫӗр ҫинҫе ҫӑкӑр ҫӗртсе пурнатӑп?..

Сакӑр хутҫен куклатнӑ куккук.—Сакӑр ҫул пурнатӑп иккенха,—тесе анаслапӑ май, карӑлнӑ ҫӑвар хупӑлҫийӗсем ҫине хӗрес хывса илнӗ Круҫка арӑмӗ.

— Есӗ мӗнма ыйтмастӑн тата?.. ыйтса йул.

Ваҥкка асламӑшӗ те ыйтма тесе пикеннӗҫҫӗ—куккук вӗҫсе кайрӗ.

— Вот!..—терӗ Круҫка арӑмӗ.—Сана каларӑм вӗт. Ҫылӑхлӑ есӗ... Паллах, ҫылӑхлӑ ҫурасемшӗн куклатса ҫӑвар тутине сайа йамастех ӗнтӗ вӑл. Ҫав Ваҥккках сана ҫылӑха кӳртсе пурнат вӗт. Итле!.. Мӗн ҫухлӗ каламанши епӗ сана.

*
* *

... Сакӑр ҫул. Сакӑр ҫул мар, тепӗр ҫулах инкеклӗ ҫирӗн ыратӑвне ҫӑтма хал ҫитеймен пирки вилсе выртнӑ Круҫка арӑмӗ.

— Вилҫӗ ӗнтӗ, вилҫӗ,—тенӗ вара Ваҥкка асламӑшӗ,—йепле вара вӑл сакӑр ҫул пурӑнма пултараймарӗ пулатха. Ҫылӑхсӑр ҫын... Ҫылӑхсӑр ҫыннӑн вил тӑприйӗ ӗнтӗ ҫӑмӑл пултӑр...

...Сӗтелри пӳремеҫӗсене тутӑрпа тирпейлӗн ҫӑркаса тухса утрӗ асанне. Йуман кутне ҫитсенех вӑл ҫӑркуҫҫи ҫине тӗшӗрӗлсе анҫӗ.

— Каҫар, йуманӑм. Каҫарӑр есӗр те, ҫылӑхсӑр пирӗштисем. Ҫас килеймерӗм. Ҫилертӗр те пулӗ. Мейӗр, ҫийӗр—хӑналанӑр. Сире ырӑ сунса ҫӗререн пехиллетӗп ҫак ӗҫме-ҫимесене... Анҫах ан манӑр мана та. Пӳрнене тӳрлетӗрсем ҫасрах тархасшӑн.

Асанне, аллинҫи пӳремеҫӗсене татӑк-татӑк ваклаcа, йуман айӗнҫи „пирӗштисене“ валеҫсе паҫӗ.

— Нивушлӗ ҫакӑн ҫухлӗ вара вӗсен йышӗ. Епӗр

пĕр ђуста кĕлетки çех кўрсе лартнăђђĕ-çке. Виçĕ çултанпа йышлăланнă пуљ çав ĕнтĕ... йышлăланнă пу-уљ,—тесе хăй ăссĕн шухăша кайса сăхсăхса ларат.—Пĕђĕкç... Çамрăк-çке кăсем пурте...

Çав вăхăтрах йуманран инçех те мар темĕскерле сасă хайаррăн кĕрлесе кайсан, асанне татах та хыпаланарах сăхсăхма пуçларĕ.

— Мĕскер тăван есĕ,—ађасемпе мĕн тăватăн?—тесе çинçенĕн каласса пырса тăђĕ пĕр илемлĕ хĕр.

— Тархасшăн пўрнене тўрлетĕр..

— Ђимха асанне!..

Асанне ура çине сиксе тăђĕ. Ун патне кĕрлевлĕн ахăлтатса пыракан çынсене курсан çанçурăмĕ çĕнĕрен çўçенсе ђĕтренсе илђĕ.

— Пўрне-е-е...

Умра ларакан йуманăн çулçисем те лăпкă çилпе хумханса шăпăлтатни,—асаннен хăтланђăкĕнђен ахăлтатса кулнă йевĕрлех туйанса кайрĕ.

* * *

Йуман айĕнђи курăк çинђе выљаса ларакан „пирĕштисем“ мар, колхосăн куçса çўрекен йаçлĕри пĕђĕк ађасем пулнă. Апла иккенне тавçăрса илсен, асанне хăйĕнђен хăй лахлатса çўçенђĕклĕн кулса илђĕ.

Йуман текех „пўремеђĕсене“ халавлăн йышăнмаст мĕн. Ун патĕнђех колхосăн тырă итемĕ. Унта колхоç-нĕксем авăн çапаççĕ. Паçăр хайарăн кĕрленĕ сасă молотилккăн сассийĕ пулнă. Ав унтах вĕçрен-вĕçе лавсем... Лавсем çине тырă тийеççĕ.

* * *

Асанне çул май пуљнитсăна кĕрсе пўрнине çыхтарса тухрĕ. Икĕ кунтан тўрленет, тесе йевитленĕ ăна тухтăр. Вара вăл хавасланнă. Хаваслансах такăр çулпа килнелле утат вăл акă. Ăна хирĕç тийевлĕ лавсем вĕçрен-вĕçе тырăпа стантсăналла шĕвăнаççĕ. Вĕсене ђылайђђен ђарăнса тăрса ăсатат асанне.

— Ҫав йуман патĕнђи лавсемех марши вара кăсем?.. Ҫавсемех ҫав, ҫавсемех—хăйне хăй ответлег асанне,—кулмасан йурĕђђĕ тепĕр хут... Ман анкăминкеллĕ хăтланђăкран тепĕр хут ахăлтатмасассăн тем пекехђĕ...

Ну, Ваңкка!, Киле ҫитсессĕн мĕн калĕши вăл мана?.. Вăрҫсах йатлĕшни ĕнтĕ, кулсах ахăлтатĕши?!..

---

# Ĕшеннĕ етем

...Ыран раштав. Ыран таса хĕр Марийа, таса сывлăшăн сĕткенлĕ хăвађĕпе ўтленсе, Христуса кĕтмен ҫĕртен сырăш ҫине ҫуратса пăрахнă куң. Ђисламаллаиха ҫакă куна пирĕн?..—тесе хăйĕнђен хăй ыйтса тĕлĕрсе ларнă Кара Елекҫейĕ.—Ҫук, пулмасť. Халăх (3-4 карђăкпа стариксем--М.П.) кирĕк мĕн калатăр. Виҫĕ уйăх ђупса, пĕр пуп тĕл пулаймарăм. Ниснай ăҫта кăна кайнă вĕсем. Ĕшентĕм ĕнтĕ тупа та. Каплах пулсассăн тĕнĕ те пĕтет пулĕ. Тухатăп ку вырăнтан. Ăҫта та пулсан пухкалттĕре кайас луђђĕ.

Ђылай антăраса ларнă Кара. Шухăша тĕрлĕ май ҫаптарса, тĕрлĕ сăлтавсемпе сўтсе-йавса пăхрĕ. Анђах ĕҫ тухмасť. Пĕрех ниҫта та вырăн памĕҫ,—терĕ вăл йулашкинђен.

Ĕҫ ҫук йенне шкапĕнђен пĕр ҫĕтĕк хупăллă йеванкĕли кăларса, сасăпах вула пуҫларĕ. Вăл каҫ ăна кансĕрлекен никамах та пулман. Арăмĕ харăлтаттарса ҫывăрнă. Хĕрĕ урама йарăнма кайнă пулнă. Ҫавăнпа та ирĕк Елекҫейе. Райри условисенђе кĕнеке вулаť вăл.

Матвей, Лукка, Иоанн ҫырнă паракрăфсем.—Нуккă, Каралĕ, ак ҫак тĕле вула халĕ,—тенĕ йевĕрлех йăпăлтатнăн туйăнна Елекҫе йӗ.

Лукка ҫырнă калавăн 13-мĕш паракрăфĕ тĕлне ҫитсен Елекҫей ђылайђђен шухăша кайса ларнă. Ик-виҫ хут вуланă вăл тĕле.

„Арҫын хĕрарăмшăн ҫуралман—хĕрарăм арҫыншăн ҫуралнă, ҫавăнпа та унăн мĕн тупăка кĕрсе выртађђе-

нех хăйĕн мăшăрне пăхăнса пурăнмалла“, тенĕ парак рăф.

—Ђăн ку,—тенĕ Кара,—конешнă... Мĕн вăл хĕрарăм?.. Тăрха, карђăк,—тенĕ вăл арăмĕн çиптунинђен йавкаласа илсе.—Нуккă, ставай прокљатйĕм... Миçе килокрам çывăртăн кĕçĕр, а епĕ пĕр крам та çук. Тăрха!.. Тул çутăлађђен пĕр тĕнђе те йулмалла мар. Йеванкĕли калаť, йеванкĕли!..—тесе йантăратнă вулакан.

Арăмĕ сехĕрленсе тăрса ларнă. Унăн ыйхăпа тăрмаккаланнă трахумлă куçĕсене лампă çути атма витĕр пăхнă пек курăннă. Хăмăр тĕсевлĕ çӳçĕ урăмçурăм арпашăвса ларнă. Вăл çӳç ăшне пĕр хăнкăлана кӳртсе йарсан алтăвипе çапсан та хăваласа кăларайас çук. Çак çӳçрен ĕнтĕ йăлмакласа илђĕ Елекçей.

— Йар... çӳçе!—терĕ арăмĕ.—Елекçей йађĕ.

— Вот кала, карђăк!.. Мĕн пур çылăхусене пĕр пытармасăр çак таса йеванкĕли умĕнђе каласа ӳкĕн. Хĕр ђухнехи çылăхусене те каламасăр ан хăвар. Кĕçĕр тĕнђе пĕтмелле. Лукка каланă тăрăх кĕçĕр тул çутăлађђен пĕр пĕрђĕ тĕнђе те йулас çук.

Арăм сехĕрленсе кайрĕ.

—Хĕр ђухне çылăх туман пуљ епĕ...

— Вот кала çав,—тĕпђет Кара,—кам та пулсан сана йуратмани? Кам та пулсан сана кађђа илесшĕн пулман-и? Веçех каласа, веçех... Ах, ăш тăвăлса киле пуçларĕ...Пĕтет тĕнђе, пĕтет...

Елекçейрен урлă пĕр шит кайма хăйайман хĕрарăм ђăнахах та тĕнђе пĕтет пулĕ тесе „çылăхèсене“ кала пуçларĕ.

— Куршук Кĕркури кађђа илесшĕнђђĕ, ху та пĕлетĕн,—тесе йађĕ вăл.

— Такс... Унпала, санăн конешнă, хутшăнусем те пулкаланă пуљ... клавным опрăсăм çавсене кала. Питĕ пысăк çылăхсем вĕсем. Çутăлађђен каласа йул.

—Кĕпене хывса... таса çанçурăмпа кала. Ку кĕнеке умĕнђе сантал кĕпепе тăни, таса хĕр Марийана каламa çук кăмăлсăрлантараť...

— Есĕ те кĕпене хыватнам?..—терĕ арăмĕ. Елексçей пилĕкĕнђи пиçиххи салтăннине курсан. Анђах тимĕр тăхаллă пиçиххи кĕпе хывас сăлтавпа мар, православнăй кĕвĕ калама салтăннă мĕн. Акă ун кĕвви. Акă такмакĕ унăн;

Акă сана кађђă,
Акă Кĕркури...
Ак сана хĕр ђух

Ашкăнса çӳрени!.. Пиçиххи айĕнђен хĕрлĕ йун пĕрĕхет. Ђылайђђен ăшăланђĕ арăм, çатма çинђи пăрçа пек. Мĕншĕн тесе арăм уншăн çуралнă, Елексçей арăмшăн мар.

Кунпах ђун канмасť Каран. Ун арăмĕн кĕçĕр таса пусăран хĕрĕх те пĕр витре шыв кăларса таса йур çине сапмала,—вара тин хĕр ђухнехи „çылăхсем" çырлахаççĕ.

Пус тараси ђăн-ђăнах ђĕриклете пуçларĕ. Арăм „çылăх" каçарттарат

Кара вулаť... Ђарăнмасăр вулаť кĕнеке. Куçĕ хупăнаť пулсан та—вулаť... вулаť...

Йарăнмаран пăшăхса тавăрăннă хĕрĕ те „таса аттерен" наккасани тӳсет. Ун сăлтавĕ пысăк мар. Йарăнма кайнă ђух ашшĕне йевитсĕр кайнăшăн çеќ. Çавăнпа „çылăхне" кура наккасĕ те пысăк мар,—Пăла çырмин ђи вакăран пĕр витре шыв пĕр çӳп-çапсăр илсе килсе ашшĕ умне лартасси...

...Наккассем вăхăтра пурнăçлапнă. Кара ђунĕ каннă. Хĕпĕртенĕ вăл. Анђах çапах та ун куçĕнђă куштан Куршук Кĕркурин мăшкăлавлă сăнĕ çухалман. Ирĕксĕрленсех шухăшланă вăл ун çинђен...

Умĕнђи лампă пусăрăннă çемĕн пусăрăнса пынă...

—...Краççын çук... Тăвар та ак ђас пĕтет... Вăрçă пуçланнă. Арханкĕлскине туртса илнĕ... Пакку та пирĕн мар, тесе хăйне хăй мăкăртатса ларнă Кара. Арăмĕпе хĕрĕ кăмака çинђе шăл шаккаса выртнă. Кара пĕтĕм тăл пĕвĕн çурри таран авăна-авăна сăхсăхнă.

* * *

Ђулл çутăла пуçланă.

Сивĕ. Сурса сурђăк ӳкмест темеллех мар та, çапах

та шатăр снвĕ çав. Елекçейĕн çемйи ыйхăран вăрачса анасланă.

Сивĕрен те хăраман, темĕнле пĕр ухмах автан тул çутăлнă хаваспа лупас айĕнҫе, ку-ку-ре-к-ку! тесе авăтни, Елекçейе „Кур-шук Кĕрку-ур-и-и!" тенĕ пекех мăшкăлавлăн туйăннă. Елекçей арăмĕ кусуй хупписем уçма тухсан, ăна копператси йенелле йăраланса пыракан 8 йывăр лав тĕлĕнтернĕ.

— Мĕн тийерĕр?!..

— Краççын...

— Вара Елекçей краççын пĕтет терĕç-ке...--Арăмĕ каллех шанмаст. Тĕнҫе пайан ҫăнахах та пĕтмелле.. Мал йенҫе пăхат... Мал йенҫен пĕтсе килет тесе ĕнентернĕ ăна Елекçей.

— Ах, ҫăнласах!.. Тыгăнҫĕ иккен, тытăнҫĕ...Елекçей!. Елекçей!..

Антăрана мĕскĕн хĕрарăм. Анҫах ăна ҫасах тăн килсе кĕрет. Мал йенҫе мăкăрланакан кăвак тĕтĕм колхос крахмал савăҫĕн тăрупинҫен палкаса тухат иккенне Кара арăмĕ ҫасах тавçăрса илнĕ.

...Вот сана тĕнҫе!.. Вот сана çырлахăннă „çылăхсем"

# ТУПМАЛЛИ.

Стр.

Макçăм çырăвĕ . . . . . . . . . . . . . . . . 3
Ĕне урищĕн . . . . . . . . . . . . . . . . 7
Актă . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 14
Сахвине тăхлаҫă . . . . . . . . . . . . . 16
Çтаппан купăс калаҫ . . . . . . . . . . . 19
Пайан . . . . . . . . . . . . . . . . . . 23
Йепле хатĕрленеççĕ. . . . . . . . . . . . 26
Раман тумланҫĕ . . . . . . . . . . . . . 29
Вĕсен опосĕ . . . . . . . . . . . . . . . 32
Ыран йупилей тенĕ ҫух . . . . . . . . . . 37
Вăл кайрĕ . . . . . . . . . . . . . . . . 39
Татăлнă ĕмĕт . . . . . . . . . . . . . . 42
Кĕрсе кайнă . . . . . . . . . . . . . . . 45
Йуман патĕнҫе . . . . . . . . . . . . . . 47
Ĕшеннĕ етем . . . . . . . . . . . . . . . 51

Редактор Г. И. Краснов.

Корректор С. Константинов.

Техредактор И. С. Ковалевский.

Обложка раб. худ. А. Демидова.

Послано в производство 3/II-33 г.

Подписано к печати 9/V-33 г.

Вышло из производства 20/V-33 г.

Хакĕ / Цена 70 пус. / коп.

Х.—3.

*П. Митта.*

**Юмористические рассказы.**

Чувашское Государственное Издательство

Чебоксары—1933.